ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 19
ЫТЛАРИКУН
№ 36 (8688)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНĔР! (1 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх. Я. Цветков.—Коллектив хастарлăхĕ (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Шупашкарти парти активĕн пухăвĕ (2 стр.).
1952 ÇУЛХИ СТРОИТЕЛЬСТВО ПЛАННЕ СРОКЧЕН ТУЛТАРАР!: В. Данилов.—Еçре тăтăклă улшăнусем тăвассишĕн; А. Талвир.—Механизмсемпе лайăх усă курмалла (2 стр.).
Н. Минин.—Колхозлă ялăн пĕр кунĕ (3 стр.).
Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ Монголи халăхне чĕнсе калани (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).
Совет Союзĕнчи халăхсемпе мирлĕ тата туслă пурăнассишĕн. Америкăпа Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕн наци совечĕн конференцийĕ (4 стр.).
Австрири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕ пичетлесе кăларнă заявлени (4 стр.).

Агроном—колхоз председателĕ

Совет Союзĕн ялхуçалăхĕ хăватлă техникăпа усă курнă тата производствăна малта пыракан агрономи наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсене ĕçе кĕртнĕ никĕс çинче аталанать. Иртнĕ çул итогĕсем колхоз строительствин пурнăçлă вăйĕ çинчен тата тепĕр хут ĕненмелле кăтартса пачĕç.

Социализмлă ялхуçалăхĕн производительнăй вăйĕсене малалла çĕклентерме пулăшакан майсем хушшинче вак колхозсене пĕрлештерни пысăк вырăн йышăнать. Колхоз строительствин нумай çулсем хушшинчи опычĕ çакна кăтартса пачĕ: пысăк колхозсем обществăллă хуçалăха пуринчен те хăвăртрах аталантарасçĕ, техникăпа тухăçлă усă курассĕ, çĕрĕç культурипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма вĕсен пысăк майсем пулассĕ.

Колхоз вăл—пысăк, кăткăс, нумай отраслĕллĕ хуçалăх. Çакăн пек хуçалăха ертсе пырас ĕçĕн пуçĕнче ăста пĕлекен, ĕçе организацилеме пултаракан, практикăллă опыт çеç мар тата теори енĕпе те лайăх хатĕрленнĕ çын тăмалла.

Владимир Ильич Ленин 1920 çултах çапла каланă:

«Тытăмăн пур йышши ĕçĕ валли те уйрăм пахалăхсем кирлĕ... Хуçалăха тытса пырас тесен, ĕçе пĕлмелле, производствăн мĕнпур условийĕсене пĕтĕмпе тата тĕплĕ пĕлмелле, çак производствăн техникине унăн ку чухнехи çулăшĕнче пĕлмелле, кирлĕ таран наукăллă пĕлӳ пулмалла».

Партипе правительство колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене хатĕрлесе воспитани парассишĕн куллен тăрăшассĕ. Совет государстви колхоз председателĕсен, бригадирсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсен тата колхоз производствинчи ытти работниксен квалификацине хăпартма ятарласа шкулсемпе курссем нумай уçрĕ. Колхоз кадрĕсен квалификацине хăпартасси вĕсен политикăллă ӳсĕмĕпе, вĕсен идейăллă çĕкленĕвĕпе уйрăлми çыхăнса тăрать.

«Колхозсем, хуçалăх организацийĕн социализмлă форми пулнă май,—тесе вĕрентет Сталин юлташ,—вĕсен пуçĕнче чăннипех революционерсем, большевиксем, коммунистсем тăрсан вĕсем хуçалăх строительствинче тĕлĕнмелле ĕçсем тума пултарассĕ».

Колхоз председателĕсен йышне тĕреклетес тĕлĕшпе тăвакан пысăк ĕçсенчен пĕри вăл—çак ĕçе политика тĕлĕшĕнчен тĕрĕсленнĕ, ĕç пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен ялхуçалăх енĕпе аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă çынсене суйласа илесси тата ĕçе лартасси пулать. Юлашки вăхăтра колхозсене ертсе пыракансем хушшинче специалистсен шучĕ чылай ӳсрĕ. Халĕхи вăхăтра çĕршывра темиçе пин ялхуçалăх артелĕсен пуçĕнче агрономсем, зоотехниксем, инженер-механизаторсем тата ытти специалистсем тăрассĕ.

Ялхуçалăх специалисчĕсем, колхоз пуçĕнче тăрса, наукăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене тимлĕ асăрхаса пырассĕ, социализмлă çĕрĕçĕн мастерĕсен пуçарăвĕсене хăвăрт хăйсен тивлечĕ туса хурассĕ, колхоз производствине мĕнпур çĕннине, малта пыраканнине кĕртсе пырассĕ.

Колхоз производствинче ялхуçалăх специалисчĕ хăйĕн пĕлĕвĕпе практикăра туллинрех усă курма пултарать. Кунта унăн умне творчествăллă ĕçсем тума пысăк майсем тухса тăрассĕ. Колхоз председателĕ пулса ĕçлекен агроном производство ĕçне наука никĕсĕ çинче туса пыма пултарать. Вăл обществăллă хуçалăхăн кашни отраслин аталанăвне экономика тĕлĕшĕнчен пĕлсе планлама тата ертсе пыма пултарать. Колхоз ялĕн ĕçченĕсем тырпул тухăçлăхне тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕçне малалла çĕклентерме, колхоз экономикине пур енĕпе те аталантарма пултаракан кашни çĕнĕ ĕçе хапăл туса йышăнассĕ. Совет специалисчĕсем халăхпа пĕрле Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн кĕрешессинчен хисеплĕрех урăх мĕнле ĕç пулма пултартăр!

Агрономсем, зоотехниксем, инженер-механизаторсем ертсе пыракан нумай колхозсем кĕске срок хушшинчех нумай отраслĕллĕ обществăллă производствăна аталантарас, колхозсене организацилесе хуçалăх тĕлĕшпе тĕреклетес, таварлă продукцие ӳстерес, колхозсемпе колхозниксен тупăшне ӳстерес ĕçре палăрмаллах çитĕнӳсем турĕç. Специалистсем ертсе пыракан колхозсем уй-хир ĕçĕсен тухăçлăхне ӳстерес, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре шалти резервсемпе туллинрех усă курассĕ.

Çулталăк çурă каярах Воронеж облаçĕнчи Молотов районĕнчи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулма Б. А. Бондаревский агронома суйланă. Вăл хăйĕн пĕлĕвĕпе опытне колхозăн обществăллă хуçалăхне пур майсемпе те тĕреклетес, шалти резервсене мобилизацилес, çĕрĕç культурине ӳстерес ĕçе панă. Колхоз нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксем акмалли çĕр лаптăкне хăвăрт ӳстернĕ, курăк акмалли тĕрĕс пусă çаврăнăшĕ туса хунă. Колхозниксем хăйсен опытлă руководителĕ—агроном ертсе пынипе ялан пысăк тухăçлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывнă, выльăх апачĕн никĕсне тĕреклетнĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре кая юлса пынине пĕтернĕ.

Воронеж облаçĕнче чылай колхозсене специалистсем ертсе пырассĕ. Çак колхозсем пурте тенĕ пекех экономика енĕпе тĕрекленнĕ, ялхуçалăх культурисем халиччен хинчен нумайрах пухса кĕртессĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстернĕ, капитальнăй строительство енĕпе пысăк ĕçсем тăвассĕ. Воронеж облаçĕнчи партипе совет органĕсем колхозсенчи ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме специалистсен çĕнĕ резервне хатĕрленĕ. 250 агроном тата зоотехник икĕ уйăхлă курсран вĕренсе тухнă. Халĕ пулса иртекен отчетлă тата отчетпа суйлав пухăвĕсенче колхозниксем 83 специалиста пурте пĕр сасăпа пулса колхоз председателĕ пулма суйланă.

Украинăра темиçе çĕр колхоза аслă тата вăтам ялхуçалăх шкулĕсенчен вĕренсе тухнă специалистсем ертсе пырассĕ. Киев облаçĕнчи Тальнов районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан пысăк колхоза агроном, УССР Верховнăй Совет депутачĕ И. А. Ременец ертсе пырать. Колхозра уй-хир, курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсем тата фермăсемпе пахча çимĕç пусă çаврăнăшĕсем тунă, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Колхоз çулталăк хушшинче икĕ миллион тенкĕлĕх ытла тупăш илнĕ.

Специалистсене колхоз председателĕсем пулма вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе Краснодар крайĕнчи, Челябинск облаçĕнчи тата çĕршывăн ытти районĕсенчи партипе совет органĕсем пысăк ĕçсем туса иртерессĕ. Çак ĕçсен результачĕсем колхозсене ертсе пырас ĕçĕн шайĕ ӳснипе, колхозсен экономики тĕрекленнинче курăнассĕ.

Çакăнпа пĕрлех чылай облаçсемпе крайсенче тата республикăсенче колхозсене ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме агрономсене сахал уйăрассĕ. Киров облаçĕнче, тĕслĕхрен, 5 пин агрономран тата зоотехникăпа ветеринари работникĕсенчен 100 çын ытларах кăна колхоз председателĕсем пулса ĕçлессĕ. Çичĕ районта ялхуçалăх шкулĕсенчен вĕренсе тухнă специалистсенчен пĕр çын та колхоз председателĕ пулса ĕçлемессĕ.

Курск облаçĕнче те ялхуçалăх специалисчĕсен йышĕ пысăк. Анчах халĕхи вăхăтра пулса иртекен отчетпа суйлав пухăвĕсенче колхоз председателĕсем пулма агрономсене сахал çĕнессĕ. Облаçри организацисем хатĕрленĕ специалистсен резервне те начар усă курассĕ. Мантуровски тата Октябрьски районсенче колхоз председателĕ пулма пĕр агронома та тăратман. Кострома тата Калуга облаçĕсенчи, çавăн пекех тата Алтай крайĕнчи нумай районсенче колхоз председателĕсене специалистсен шучĕпе тĕреклетес ĕç питех те çителĕксĕр пырать.

Колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене тĕреклетесси—государствăллă пысăк ĕç. Апла пулсан та, хăшпĕр вырăнсенчи партипе совет органĕсем нумай отраслĕллĕ пысăк колхозсем туни колхозсен обществăллă хуçалăхне ертсе пырассишĕн руководительсен ответлăхне ӳстернине, партипе совет органĕсем енчен куллен тăрăшса, пĕлсе, квалификациллĕ ертсе пыма хушнине шута илмессĕ. Сăмах кунта колхозсенчи ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме агрономсене, зоотехниксене, ялхуçалăхĕн аслă тата вăтам шкулĕсенчен вĕренсе тухнă ытти специалистсене ĕçе хăюллăнрах лартасси çинчен пырать.

Колхозсене квалификациллĕ ертсе пыни пысăк аталаннă нумай отраслĕллĕ колхоз производствине малалла тĕреклетме, ялхуçалăхĕн тĕп задачине—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçне чылай ӳстермелли, обществăллă выльăх йышĕпе унăн тухăçлăхне хăвăрт ӳстермелли задачăна ăнăçлăн татса пама пулăшать.

(«ПРАВДА» хаçатăн февралĕн 18-мĕшĕнчи умстатьи).

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

ВКП(б) Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 3-мĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. Унта çак статьясем пичетленнĕ: П. Трофимовăн—«Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни»; Ф. Якимовăн—«Пирĕн халăхăн чаплă çитĕнĕвĕсем» тата Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра çамрăк вылăхсене мĕнле пăхса усрани çинчен парторганизаци секретарĕ П. Токсубаев юлташ каласа пани.

Тĕнчери пару-тăру çинчен истори наукисен кандидачĕ Г. Чавка çырнă «Аслă халăхсен тăванла туслăхĕ» статья пичетленнĕ.

Çуракине большевикла хатĕрленĕр!

★ ★ ★

Пысăк тухăçлă тырпулшăн

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Коминтĕрн» колхоз, малта пыракан мичуринла агрономи наукине вĕрентĕвне пурнăçласа, 1951 çулта вăйлă тырпул пухса кĕртрĕ. Акнă мĕнпур çĕр лаптăкĕнчен кашни гектар пуçне вăтам шутпа 100 пăт ытла тĕштырă пухса кĕртнĕ. Вăл шутран 120-шер пăт ыраш, 109-шар пăт тулă туса илнĕ. Уйрăм бригадăсем тата та тухăçлăрах тырпул çитĕнтернĕ. Акă В. Тимофеев коммунист ертсе пыракан бригада мĕнпур лаптăк çинче гектартан 114 пăт тулă, 110 пăт сĕлĕ, хăшпĕр участоксенче вара 125-шер пăт тулăпа сĕлĕ, 150-шар пăт урпа туса илнĕ.

Колхозниксем иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе тивĕçлипе савăнассĕ. Анчах вĕсем çитĕнӳсемпе лăпланса лармассĕ, хĕрсе çуракине хатĕрленессĕ.

Вăйлă тырпул çитĕнтерес республикăра чапа тухнă колхозсен пахха опытне шута илсе, кашни бригадăрах агротехникăлла ĕçсен планне тунă. Çураки валли колхоз сортлă вăрлăхсем хатĕрленĕ. Вырăнти удобрени ытларах хатĕрлес, ăна пĕтĕмпех уя кăларас ĕçсем анлă сарăлса пырассĕ. Уя кăларнă тислĕке пĕтĕмпех компост тунă. Удобрени пухас, ăна уя кăларас ĕçре комсомолецсенчен тунă ушкăн хастарлă ĕçлет.

Иртнĕ кĕркунне çанталăк типĕ тăчĕ, тăпрах чылай анлти сийĕ те типĕ кайрĕ. Çавăнпа та кăçал уя юр тытса тăварас тĕлĕшпе нихçанхинчен тимлĕ ĕçлес пулать. Колхоз членĕсем çавна лайăх ăнланассĕ. Вĕсем 205 гектар çинче икĕ хутчен юр тытнă.

Колхоз МТС-па договор турĕ. Договора колхозниксем пĕрлехи пухăвĕнче ертсе пыса çирĕплетнĕ. МТС-ăн колхоза пĕлтĕрхинчен чылай ытларах ĕç туса памалла.

Колхозниксем хăйсен пухăвĕнче çĕнĕ обязательство илчĕç: мĕнпур çĕр лаптăкĕ çинче гектартан 108 пăтран кая мар тĕштырă, 132 пăт кок-сагыз тымарĕ, 960 пăт çĕрулми туса илме пулчĕç.

В. НИКОЛАЕВ.

Çуракине хатĕрленнине тĕрĕслемелли рейд

Решени йышăннă, ĕçне туман

ВĂРМАР. Районти уйрăм колхозсем иртнĕ çулта пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтерчĕç. «Дружба» колхоз плана пур культурăсем енĕпе те тултарнă. Тикешри «Большевик», «Хĕрлĕ Бĕтне», Кив Вăрмарти «Большевик» ялхуçалăх артелĕсем техникăллă культурăсем туса илес енĕпе те пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Малта пыракан колхозсем кăçал та хĕллехи агротехника ĕçĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырассĕ, çуракине лайăх хатĕрленессĕ. Мичурин ячĕпе тăракан, «Свобода», «Хĕрлĕ Бĕтне» тата ытти хăшпĕр колхозсем кирлĕ чухлĕ вăрлăх уйăрнă, вĕсене тасатса сортланă, акма юрăхлă тунă. Вăйлă тырпулшăн çине тăрсах кĕрешекен колхозсем ялхуçалăх машинисемпе инвентарне те декабрьпе январь уйăхĕсенчех юсаса çитернĕ. Вĕсем уя удобрени кăларас тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлессĕ.

Анчах, районĕпе илсен, çуракине хатĕрленнин ĕç çителĕксĕр пырать. Хăшпĕр колхозсене парти обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсенчен тивĕçлĕ вывод туман, кăçалхи вăйлă тырпулшăн чăн-чăн кĕрешӳ пуçарса яман.

«Труд» колхозра вăрлăх çителĕклĕ хатĕрленмен. Колхоз председателĕ Антонов юлташ урпа, вир, кантăр вăрлăхĕсене салатма ирĕк панă. Колхозăн нумай çул ӳсекен курăк вăррисем, çĕрулми, силос тумалли культурăсемпе тымарçимĕç вăрлăхĕсем те çитмессĕ.

Вăрлăхсене сортласа тасатма кунта пĕр ĕçре валлла тин тытăннă. Тимĕрçĕ лаççи ялан тупă тăрать. Колхоз руководителĕсем ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе пылчăк вырăна тăварса пырассĕ. Бригадăсем уя пĕр чухлĕ тислĕк кăларнине правлени шута илмест. Колхозра кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе кĕл пухмассĕ, известь хатĕрлеме тытăнман.

«Маяк» колхоз пĕлтĕр кашни гектартан тырă плана пăхнинчен 6 центнер сахалтарах туса илнĕ. Çакă ял-агротехникăллă ĕçсене пурнăçламаннинчен килнĕ. Кунта кăçал та пĕлтĕрхи йăнăшсене шута илмессĕ. Бригадăсем вăйлă тырпулшăн ăмăрту пуçарса яман. 34 плуг çеç юсанă пулин те, колхоз правленийĕ районти ялхуçалăх пайне 44 плуг юсанă, тесе пĕлтерме вăтанман. Юсанă сеялкăсенчен те чылайăшĕ ĕçлеме юрăхсăр.

Артель членĕсене наука çитĕнĕвĕсемпе, малта пыракансен опычĕпе паллаштармассĕ. Ку тĕлĕшпе пĕр лекци те, пĕр доклад та пулман. Молостов агрономпа Стюкин ветеринари техникĕ агрозоотехника курсĕнче икшер занятие çеç иртернĕ.

Кун пек тĕслĕхсене «Гигант», «Пионер», «30 лет Чувашии», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче те курма пулать.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе кăçал колхозсен уй-хирне торфпа юшкăн тăпри кăларма, йӳçĕк тăпрасене известлеме пăхнă. Ялхуçалăх специалисчĕсем çав ĕçсен пĕлтерĕшĕ çинчен колхозниксене каласа памассĕ, колхозсене куллен ĕçре пулăшу памассĕ. Районта уя тислĕк кăларасси тата минераллă удобренисем тупассине çителĕксĕр пулса пыни ялхуçалăх пропагандипе çителĕксĕр сарса пынинчен те килет.

Пĕр уйăх каялла райсовет сессийĕнче çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатасси çинчен сӳтсе явнăччĕ. Районти ялхуçалăх пайĕн сесси решенине пурнăçлама хăйĕн специалисчĕсене, колхоз руководителĕсене мобилизацилемелле пулнă. Анчах вăл çапла тумарĕ-ха.

Районти партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме, вăйлă тырпулшăн социализмлă ăмăртăва анлăрах сарса яма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

«Чăваш Коммуни» хаçат бригади:
Т. СЕРГЕЕВ.
Г. МАТВЕЕВ.
И. ВОЛКОВ.

Колхозсем МТС-па договор тăвассĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районти колхозсем 1952 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене туса пыма МТС-па договор тăвассĕ. Пухусенче колхозниксем иртнĕ çулта тунă договора мĕнле пурнăçласа пынине пăхса тухассĕ, ĕçри çитменлĕхсене малашне пĕтерсе пымалли майсене кăтартса хăварассĕ.

Çак кунсенче «Красное знамя» колхоз МТС-па договор турĕ. Договор тăрăх МТС-ăн кăçал колхоза нумай ĕçсем туса памалла. Колхоз тракторсемпе пĕр чăрмавсăр ĕçлеме лайăх условисем туса пама обязательство илчĕ. Трактористсем валли горючи, шыв вăхăтра турттарса тăма, плугарьсем вăхăтра уйăрма, агротехникăллă ĕçсене лайăх пурнăçлама, ытларах удобрени кăларма кирлине те колхоз членĕсем çирĕппĕн кăтартса тăварчĕç. Колхоз членĕсем МТС сухаласа акнă уйсенчен кашни гектартан 15 центнертан кая мар тĕштырă туса илме тата ытти культурăсене те лайăх пахă ситĕнтерме, договор условийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыма сăмах пачĕç.

П. ГОЛИЦЫН.

Февралĕн 15-мĕшĕ — Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх — Мартăн 15-мĕшĕ

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрлечĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	74,8	78,2	58,6
Элĕк	76,4	69,7	49,4
Вăрнар	86,3	67,9	76,5
Йĕпреç	85,5	78,8	48,7
Пшлей	58,4	—	24,9
Калинино	81,8	63,4	78,3
Канаш	83,6	78,4	74,1
Комсомольски	90,5	96,2	86,8
Буславка	80,5	93,5	75,3
Красноармейски	64,4	19,7	55,5
Хĕрлĕ Чутай	83,5	61,0	—
Кувакино	59,8	73,6	38,5
Сĕнтĕрвăрри	72,4	66,9	42,2
Муркаш	107,0	110,2	—
Октябрьски	57,2	82,1	61,8
Первомайски	83,1	55,4	79,5
Пăрачкав	85,2	95,8	98,3
Советски	62,8	—	61,6
Сĕнтĕр	96,3	32,7	76,6
Вăрмар	61,6	88,8	32,2
Çĕрпӳ	62,2	82,4	57,2
Шупашкар	89,9	88,4	38,9
Чкаловски	96,7	80,2	67,8
Чурачăк	79,4	54,0	42,5
Шăмăршă	66,6	66,4	61,9
Шăхасан	76,4	66,0	49,2
Çĕмĕрле	114,9	81,0	181,0
Етĕрне	75,0	94,0	51,4
Елчĕк	40,3	71,6	54,8
Тăвай	56,1	98,0	45,0

Коллектив хастарлăхĕ

ЙĔПРЕÇ, февралĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманпромхоз коллективĕ уйăхлăх ирттерме тĕплĕ хатĕрленчĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче ĕçлеме кашни деха тата участока график çирĕплетсе панă, механизмсене юсаттарнă. Рабочисем, колхозниксем, инженерсемпе техниксем тата служащисем ĕç тухăçлăхне ӳстерме, Сталин юлташ патне янă çырура йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлама сăмах пачĕç.

Уйăхлăх пуçлансан участоксемпе бригадăсем, уйрăм рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлчĕ. Норма тăрăх кашни шоферăн куллен 12—13 фестметр йывăç турттарса кăлармалла. Кутузовпа Барышев шоферсем куллен 25-шер фестметр турттарса кăларма обязательство йышăнчĕç. Февралĕн 15—17-мĕшĕсем хушшинче Барышев юлташ 82 фестметр, Кутузов юлташ—90 фестметр турттарса кăларчĕç. Çамрăк шофер Тютяев юлташ ĕç нормине куллен икĕ хут иртерсе тултарать.

Варганов юлташ ертсе пыракан грузчиксен бригади ĕç нормине куллĕн 1,5—2 хут иртерсе тултарать. Александров юлташ ертсе пыракан грузчиксен бригади те паха тĕслĕхсем кăтартать.

Нумаях пулмасть вăрманпромхоз касна йывăçа çул хĕррине илсе тухма КТ-12 тракторсем 4 туянчĕ. Трактористсем çамрăк, вĕсен тата инженерсемпе техниксен çавăн пек тракторпа ĕçлес тĕлĕшпе опыт çук. Çĕнĕ механизмсемпе лайăх усă курас тесе трактористсем пĕр мастер, механик тата технорук М. Сысуйкин юлташăн опычĕпе паллашма Киреме кайса килчĕç. Норма тăрăх тракторпа куллен 27 фестметр йывăç çул хĕррине илсе тухмалла. Февралĕн 15—16-мĕшĕсенче Пестов тракторист 40—47 фестметр, Кандрин тракторист—38—40 фестметр илсе тухрĕç.

Электропăчкăпа йывăç касса хатĕрлекен Данилов юлташ ĕç нормине 125—130 процент тултарса пырать. Çавăн пек паха тĕслĕхсем тата чылай.

Коллективăн пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ӳссе пынине çавăнтан курма пулать. Уйăхлăх пуçланиччен вăрманпромхоз куллен вăтам шутпа 900-шер фестметр йывăç турттарса кăларатчĕ. Февралĕн 15-мĕшĕнче 1.096 фестметр, февралĕн 16-мĕшĕнче—1.000 фестметр турттарса кăларнă. Сезонри плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарас тесен куллен 740 фестметр турттарса кăлармалла.

Йĕпреç районĕнчи чылай колхозсем уйăхлăха активлă хутшăнчĕç. Колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Уйăхлăх пуçланиччен лавçăсем куллен вăтам шутпа 2—2,2 фестметр йывăç çул хĕррине илсе тухатчĕç, халĕ 3-шер фестметр илсе тухассĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсемпе «Большевик» колхоз лавçисем тата тухăçлăрах ĕçлессĕ.

Мерчĕк вăрман участокĕнче колхозниксем электростанци вăйĕпе йывăç касса хатĕрлессĕ. Бригадăра, мотористсăр пуçне, пурте колхозниксем ĕçлессĕ. Норма тăрăх электростанци вăйĕпе сменăра 80 фестметр йывăç касса хатĕрлемелле пулсан, колхозниксем 90—100 фестметр касса хатĕрлессĕ. Çак тĕслĕх колхозниксен культурăллă-техникăллă шайĕ тата пуçарулăхĕ ӳсниче кăтартать. Электроэнергипе усă курни колхозниксен ĕç тухăçлăхне икĕ хута яхăн ӳстерчĕ.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Хăшпĕр механизаторсем оборудованин хăвачĕпе тулли усă курмассĕ. Уйрăмах Октябрьски районĕнчи нумай колхозсем уйăхлăха япăх хутшăннине палăртас пулать.

Я. ЦВЕТКОВ,
Йĕпреç вăрманпромхоз директорĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

СССР Верховнăй Совет сессийĕ ячĕпе

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари предприятисенче СССР Верховнăй Совечĕн пулас сессийĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарăлса пырать.

Кировски заводри металлургсем стахановла ĕçлессĕ. СССР Верховнăй Совет депутачĕ, старши мастер А. К. Байков ертсе пыракан участокри прокатчиксен коллективĕ уйăхри графикран икĕ кун мала иртсе ĕçлесе пырать. П. В. Ивановпа П. П. Ульянов ертсе пыракан вальцовщиксен бригадисем февралĕн малтанхи çур уйăхĕнче планран иртерсе 200 тонна металл прокат тунă.

* * *

МАГНИТОГОРСК, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари металлургсем СССР Верховнăй Совечĕн пулас сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăнă.

Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи доменщиксемпе сталеварсем производствăра пысăк çитĕнӳсем тунă. Вĕсем февралĕн малтанхи çур уйăхĕнче заданирен иртерсе чугун тата хурçă нумай шăратса кăларнă. Юлашки талăк хушшинче хурçă шăратакансем хăвăрт майпа хурçă шăратнă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарас умĕн

Пĕтĕм çĕршывра Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине палăртма хатĕрленес ĕç сарăлса пырать. Хуласемпе ялсенче истори паллă ĕçсемпе çыхăнса тăракан вырăнсене экскурсие кайса курассĕ. Унта Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем граждан вăрçи çулĕсенче тата Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тунă паттăр ĕçсемпе паллашассĕ. Çавăн пекех музейсемпе выставкăсене нумай çынсем пырса курассĕ.

Пĕтĕм халăх праçникĕ ячĕпе çар округĕсенче, флотсемпе флотилисенче докладсемпе лекцисем пулассĕ. Нумай çĕрте хĕллехи спорт ăмăртăвĕсене иртерессĕ.

Офицерсен çуртĕсемпе çар чаçĕсен клубĕсенче салтаксемпе офицерсем тата çар служащийĕсен çемйисенчи çынсем граждан вăрçи участникĕсемпе тата Совет Союзĕн Геройĕсемпе тĕл пулассĕ. Кун пек тĕлпулу Совет Çарĕн М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Тĕп çуртĕнче пулса иртнĕ. Кунта Чапаев ертсе пынă дивизире пулнă М. А. Попова, граждан вăрçи çулĕсенче партизансен кĕрешĕвне хутшăннă Г. С. Ивкин, граждан вăрçинче тата Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тăшмансене хирĕç çапăçнă Совет Союзĕн Геройĕ Н. М. Хлебников генерал-полковник тухса каланă.

* * *

Совет Çарĕн М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Тĕп çурчĕ февралĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитиччен çар округĕсенче тĕл перекенсен заочнăй ăмăртăвне иртерет. Ку ăмăртăва Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа иртерессĕ. Çар спортсменĕсем пĕчĕк калибрлă винтовкăран, револьвертан тата пĕчĕк калибрлă пистолетран 50 метр персе ăмăртассĕ. (ТАСС).

Хурсем нумай ĕрчетессĕ

КУРГАН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Курган облаçĕнче нумайранпа шадрински текен хурсем ĕрчетессĕ. Çак хурсем пысăк пулассĕ, вĕсен ашĕ уйрăмах тутлă. Шадрински районти колхозниксем Исеть ятлă юханшыв хĕрринче ăратлă хурсем ĕрчетмелли 6 ферма организациленĕ. Çав фермăсене икĕ колхоз тытса тăрассĕ. Кăçал çулла икĕ колхозăн хур фермисенче 10 пин ытла хур пулать.

Колхозсен пайланман фончĕсем ӳссе пырассĕ

АШХАБАД, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çулта Туркменистанри колхозсем пысăк тупăш илнĕ. Государство республикăри колхозсене çĕр мамăкĕ планне палăртниинчен пысăкрах тухăçлă туса илнĕшĕн преми-надбавка шучĕпе кăна 490 миллион тенкĕ яхăн тӳленĕ.

Колхозсем обществăллă хуçалăха тĕреклетсе тата сарса пыма укçа-тенкĕ нумай уйăрассĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнче ялхуçалăх артелĕсем пайланман фонда, иртнĕ çулхи çак уйăхрипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ытларах укçа-тенкĕ уйăрнă.

Мары облаçĕнчи Туркмен-Калинински районти «Красный Октябрь» колхоз иртнĕ çулталăкра 18 миллион тенкĕ тупăш илнĕ. Колхоз пайланман фонда 3,5 миллион тенкĕ укçа уйăрнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шупашкарти парти активĕн пухăвĕ

Шупашкарти парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта хулари шкулсенче вĕренекенсене воспитани парас ĕç çинчен ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Иванова юлташ доклад турĕ.

— Совет шкулĕ, — терĕ докладчик, — çамрăксене коммунизмлă воспитани парас ĕçре малти вырăнта тăрать. Партипе Совет правительстви шкулсем тата ача-пăча учрежденийĕсем ытларах пулччăр тесе куллен тăрăшаççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна пирĕн хулара 3 вăтам шкул тата çичĕ çул вĕренмелли 2 шкул уçнă. Халĕхи вăхăтра хулара 10 вăтам шкул, çичĕ çул вĕренмелли 4 шкул тата 8 пуçламăш шкул ĕçлеççĕ. Вĕсенче 8.737 ача вĕренет. Унсăр пуçне ачасен тĕрлĕ учрежденийĕсем: Пионерсен çуртĕ, ачасене художествăллă воспитани памалли çурт, çамрăк техниксемпе натуралистсен станцийĕ, ачасен спорт шкулĕ, ачасен библиотеки т. ыт. те пур.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă постановленисене пурнăçласа, совет шкулĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Хулари шкулсенчи нумайăшĕ 1950—1951 çулта ăнăçлă ĕçленĕ. Ачасем пĕлӳ нумайрах илнĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕн малтанхи çурçулĕнчи ĕçсем çакна кăтартса параççĕ: хулари шкулсен ачасен пĕлĕвне тата ытларах ӳстерме, вĕренекенсен дисциплинине çирĕплетме пур майсем те çителĕклĕ. Хулари шкулсенчи 25 класра вĕренекенсем хушшинче малтанхи çур çулта ĕлкĕрсе пырайманнисем пулмарĕç, 46 учителĕн, вĕсем вĕрентекен предметсем тăрăх, вĕренӳре ĕлкĕрсе пыманни пĕр ача та çук. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, хĕрачасен пĕрремĕш вăтам шкулĕ (директорĕ Сычева юлташ), арçын ачасен тăваттăмĕш вăтам шкулĕ (директорĕ Тарасова юлташ), çичĕ çул вĕренмелли 12-мĕш шкул (директорĕ Зиневский юлташ) пысăк çитĕнӳсем турĕç. Кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче пĕрремĕш вăтам шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем 109 ача пулнă пулсан, иккĕмĕш чĕрĕк иртнĕ тĕле вĕсем 59 пулнă. Ку шкулти пиллĕкмĕш классенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыманни пĕр хĕрача та çук.

Кунпа пĕрлех çакна палăртмалла: ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ кăтартса панă çитменлĕхсене парти организацийĕсем, çавăн пекех хула Совечĕн çутĕç пайĕ вăраххăн пĕтерсе пыраççĕ. Малтанхи çур çулта хулари шкулсенче вĕренекенсенчен 12,7 процентĕ пур предметсемпе те ĕлкĕрсе пырайман. Ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ уйрăмах 2, 8 тата 22 мĕш вăтам шкулсенче пысăк. Унти шкул директорĕсем — Сучков, Арбатов, Алексеев юлташсем тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсем—Петриченко, Семенов, Степанов юлташсем вĕренӳ пахалăхĕшĕн начар кĕрешеççĕ.

Пуçламăш парторганизацисем тата учитель-комсомолецсен организацийĕсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхсене пĕтерме коммунистсене, комсомолецсене тата учительсен коллективне кирлĕ пек мобилизацилемеççĕ. Вĕренӳ пахалăхĕ пысăк пуласси—вĕрентӳпе педагогикăллă пĕтĕм ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен килет. Çак ĕçре идейăлăх сӳлĕ пусăмра тăмалла, пĕтĕм ĕçре парти кăтартăвĕсем тĕп вырăнта пулмалла. Анчах уйрăм предметсем тăрăх вĕрентесси идейăлăх енчен сӳлĕ пусăмра тăмасть. Сăмахран, вырăс чĕлхине вĕрентекен Григорьев юлташ (хĕрачасен виççĕмĕш вăтам шкулĕ) хăйĕн ĕçĕ çине формально пăхать, уроксене ирттерме хатĕрленмест, хăйĕн квалификацине ӳстермест.

Уйрăм шкулсенче ССР Союзĕн историне, СССР Конституцине вĕрентесси идея тĕлĕшĕнчен вăйсăр пулса пырать. Ку вăл хăшпĕр преподавательсем хăйсен теорилĕ пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленинчен килет.

Шкул директорĕсем учительсен ĕçне начар тĕрĕслесе тăраççĕ. Ачасене идейăллă-политикăллă воспитани парас ыйтусене педагогика советĕнче, класс руководителĕсен канашлăвĕсенче, парти тата профсоюз пухăвĕсенче сайра хутра çеç сӳтсе яваççĕ.

ВКП(б) хула комитечĕ тата хула Совечĕн çутĕç пайĕ шкулсенче уйрăм предметсем тăрăх ачасене мĕнле вĕрентнине тĕрĕслесе тăмаççĕ, шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăхăтра палăртса, вĕсене çийĕнчех пĕтерме тăрăшман. Преподавательсен кадрĕсене суйласа илес, вĕсен идейăллă-теорилĕ тавракурăмне тата квалификацине ӳстерес ĕç çине те кирлĕ пек тимлĕхпе пăхман.

Уйрăм шкулсенче дисциплина çирĕп мар. 2, 11 тата 22-мĕш вăтам шкулсенче чылай ачасем уроксене сиктерсе çӳреççĕ. 22-мĕш шкулта хăш чухне уроксем пулмасăр юлнă. Шкулта, çемьере, общеcтвăллă вырăнсенче хăшпĕр ачасем хăйсене тыткаламалли йĕркене пăсаççĕ.

Директорсен, учительсен тата парти организацийĕсен шкулти йĕркесене çирĕплетес, ачасене воспитани парас тата ăнланулă дисциплинăна çирĕплетес тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлемелле. Учительсен ачасенчен нумайтарах ыйтмалла, класс руководителĕсен ответлăхне ӳстермелле.

Хула Совечĕн çутĕç пайĕ шкулсен ĕçне тĕплĕ сăнаса пĕлмест, хулара çутĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе хăйĕн пуçарулăхне кирлĕ чухлĕ палăртмасть. Çутĕç пайĕ хула Совечĕ умне организаципе хуçалăх ыйтăвĕсене кăна кăларса тăратать, анчах вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ыйтусене хускатмасть.

Чылай шкулсенче комсомол организацийĕсем начар ĕçлеççĕ. Парти организацийĕсем шкулти комсомол ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. ВЛКСМ хула комитечĕ учитель-комсомолецсен тата вĕренекен комсомолецсен организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пырать. пионер организацийĕсен ĕçне те кирлĕ пек йĕркелемен-ха.

Ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Пионерсен çуртĕ тӳса пыракан ĕçсенчен чылайăшĕ идейăпа политика тĕлĕшĕнчен сӳлĕ пусăмра пулмаççĕ, массăллă ĕçсене ирттерме тĕплĕ хатĕрленмеççĕ. Ачасене художествăллă воспитани паракан çурт (директорĕ Петров юлташ) çултатăк пуçламăшĕнче плансăр ĕçленĕ. Тĕрлĕ кружоксен ĕçне начар тĕрĕслеççĕ. Ачасен учрежденийĕсене ертсе пыракансем шкулсемпе тачă çыхăнса ĕçлемеççĕ.

Ачасене воспитани парас ĕçре ашшĕ-амăшĕсем те ответлăх пысăк. Хăшпĕр ачасен ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисем мĕнле вĕреннипе пачах интересленмеççĕ.

Ачасене воспитани парасси ашшĕ-амăшĕсен ответлăхне ӳстермелле. Çемье тата общеcтвăллă организацисем шкулпа тачă çыхăну тытсан кăна çамрăк ăрăва воспитани парас задачăна ăнăçлă пурнăçлама пулать.

Доклад тăрăх 11 çын тухса каларĕ.

Арçын ачасен тăваттăмĕш вăтам шкулĕнчи парторганизаци секретарĕ **Александрова** юлташ хулари культурăпа çутĕç учрежденийĕсем ачасене çирĕп дисциплинăллă пулма вĕрентме сахал пулăшни çинчен каласа пачĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн пĕр цехĕнчи парторганизаци секретарĕ **Рогачев** юлташ ВЛКСМ хула комитечĕпе хулари çутĕç пайне шкул ачисен канăвне начар йĕркеленĕшĕн критикăларĕ. 22-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекен ачасемпе уроксем хыççăн нимĕн те тумаççĕ. Театра тата кинона ушкăнпа илсе çӳресси не йĕркелемен.

— Профсоюз организацийĕсем ачасем хушшинче сахал ĕçлеççĕ,—терĕ пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюз хула комитечĕн председателĕ **Шигаева** юлташ.—Клубсенче ачасен художествăллă пултарулăх кружокĕсем çукпа пĕрех, ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче те педагогика пропагандине кулленех туса пымаççĕ.

Предприятисемпе учрежденисен, профсоюз организацийĕсен руководителĕсем рабочисемпе служащисен килти пурнăçĕпе, вĕсен ачисем мĕнле вĕреннипе сахал интересленеççĕ.

Ачасен больницинчи главнăй врач **Молчанова** юлташ шкул ачисене медицина енĕпе пулăшу парасси çинчен каларĕ.

Çиччĕмĕш вăтам шкулти учительница **Андреева** юлташ, вунпĕрмĕш вăтам шкул директорĕ **Стребнев** юлташ уроксем хыççăн ачасемпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕç.

Доклад тăрăх тата ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ **Серякова**, иккĕмĕш вăтам шкул директорĕ **Сучков**, хула Совечĕн çутĕç пайĕн заведующийĕ **Семенова** тата ытти юлташсем тухса каларĕç.

Парти активĕн пухăвĕ сӳтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Райком бюровĕ механизаторсен кадрĕсем çинчен

ПЕРВОМАЙСКИ. ВКП(б) райком бюровĕ механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе воспитани парас ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе яврĕ.

Районта ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилесси çултан-çул ӳсет, государство машина-трактор станцине тата колхозсене хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантарать. Çакна май механизаторсен кадрĕсем хăвăрт хутшăнаççĕ.

Кăçал МТС-а çĕнĕрен нумай тракторсемпе комбайнсем тата ытти машинăсем килмелле. Çавăнпа та кадрсем хатĕрлес ыйту çивĕччĕн тухса тăчĕ. Дизельнăй тракторпа, самоходнăй комбайнпа ĕçлекенсем, механиксем, шоферсем нумай кирлĕ пулаççĕ Анчах МТС дирекцийĕ механизаторсен кадрĕсене вĕрентес тĕлĕшпе кăçал та çителĕксĕр ĕçлет. МТС çумĕнчи курсра халĕ 37 çын вĕренеççĕ, анчах вĕренме илмелли плана пурнăçламан.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем механизаторсен кадрĕсене хатĕрлесси çине сиелтен пăхаççĕ. Хрущев ячĕпе тăракан, «Осоавиахим», «Новая сила», «Алга» колхозсен правленийĕсем трактористсемпе комбайнерсен курсĕсене вĕренме çамрăксене уйăрса ямаççĕ.

Машина-трактор станцийĕнчи партбюро механизаторсен кадрĕсене идейăллă воспитани парас енĕпе начар ĕçлет. Халĕ мастерскойра ĕçлекен трактористсем тата курсра вĕренекенсем хушшинче ĕç дисциплинине пăсакансем пур. Çирĕп йĕрке туса хурассишĕн çине тăрса кĕрешни курăнмасть. Партбюро секретарĕ Вахитов юлташ агитаторсен ĕçне ертсе пымасть. партбюро членĕсем хăйсем те политикăллă ĕçе çителĕклĕ хутшăнмаççĕ.

Райком бюровĕ механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе воспитани парас ĕçе лайăхлатмалли майсене палăртрĕ.

1952 ÇУЛХИ СТРОИТЕЛЬСТВО ПЛАННЕ СРОКЧЕН ТУЛТАРАР!

Ĕçре татăклă улшăну тăвассишĕн

Чăваш республикине пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй предприятисем çĕнĕрен туса лартма тата кивисене çĕнетсе пысăклатма государство çулсерен укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать. Республикăра, уйрăмах Шупашкар хулинче строительство ĕçĕсене тума ятарласа трестсем, строительствăна монтаж кантурĕсем организациленĕ. Кашни стройкăрах механизмсем, ăста рабочисем çителĕклĕ. Государство оборудованипе материалсем çителĕклĕ уйăрса парать, вырăнти материалсем туса кăларасси çултан-çул ӳсет.

Чылай строительство организацийĕсем государство уйăрса паракан укçа-тенкĕпе лайăх усă курмаççĕ. Сăмахран, коммунальнăй банк урлă укçа-тенкĕ илсе тăракан организацисем иртнĕ çулхи плана пĕтĕмĕшпе 67 процент çеç тултарнă, миллионшар тенкĕ укçапа усă курман.

Строительство ĕçĕсем юлса пыни проектсемпе сметăсене вăхăтра туса хатĕрлеменнинчен, заказчиксемпе подрядчиксем пĕр-пĕринпе вăхăтра договор туманнинчен, уйрăмах стройкăсенче механизмсемпе лайăх усă курманнинчен, ĕçе тĕрĕс йĕркелеменнинчен килет. Пĕлтĕрхи план тăрăх педагогика институчĕ валли çĕнĕ çуртсем лартма 700 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Техникăллă проект çукпа 156 пин тенкипе çеç усă курнă. Çав проекта халиччен те çирĕплетмен. Çĕмĕрле хулинче 160 вырăнлă шкул çуртĕ лартмалла пулнă. Çĕмĕрле райсовет исполкомĕпе хула Совет исполкомĕ шкул çуртне хуçалăх меслечĕпе тума килĕшнĕ. Пĕрремĕш çур çулта шкул çуртне тума тытăнман. Июль уйăхĕнче хула Совет исполкомĕ «Чăвашстрой» трестпа договор турĕ. Сметăсене тӳрлетменнипе трест çийĕнчех ĕçе тытăнайман.

Шупашкарти «Водосвет» электростанци водопровод тумалли плана тултарман. Электростанци дирекцийĕ оборудовани, пăрăх вăхăтра кӳрсе килме тăрăшман.

Техникăллă документсем вăхăтра çырса хатĕрлеменнипе ялхуçалăх институчĕ валли общежити тума укçа-тенкĕ парас ĕçе тĕмисе хутчен чарса лартнă. Проектпа сметăсене 1951 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне çеç туса хатĕрленĕ, анчах декабрĕн 26-мĕшĕнче, проекта регистрациленĕ çинчен ĕнентерекен хут тăратманнипе, банк каллех укçа пама чарса лартрĕ.

1951 çулта Муркашра райисполком валли çĕнĕ çурт лартма пăхнăччĕ. Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх министерстви çаврăнăçусăр ĕçленипе çав çурта лартма уйăрса панă укçапа усă курман.

Строительство организацийĕсенче ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, материалсем перерасходлессишĕн кирлĕ пек кĕрешни пулман. «Чăвашстрой» трестра строительство хакне чакармалли организациллĕ-техникăллă плана 1951 çулхи апрель уйăхĕнчен хушма предприятисем, участоксемпе бригадăсем патне çитермен, малта пыракансен опытне пĕтĕçтерес ĕçе йĕркелемен. Механизмсемпе лайăх усă курманнипе тата социализмлă ăмăртăва аплă сарма тăрăшманнипе трест ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарман, ĕç укçи планран ирттерсе пĕтернĕ.

Трестăн штукатурка тумалли агрегат пур. Ăна пĕлтĕр пурĕ те 320 сехет çеç ĕçлеттернĕ, штукатурка ĕçне 91 процент тарах алă вĕççĕн тунă. Транспортерсемпе, крансемпе тата ытти механизмсемпе те лайăх усă курман.

Уйрăм участоксенче строительство пахалăхĕшĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ, çуртăн хăшпĕр пайĕсене пăсса тăваççĕ. Ăста рабочисемпе тĕрĕс усă курман, пĕр стройкăран тепĕр стройкăна куçарнă тĕслĕхсем сахал мар пулнă.

Треста кăçал 6 пин кубометр ытла чул кирлĕ. Унăн хăйĕн чул хатĕрлекен предприятийĕ çук. Кирпĕч те çителĕксĕр. Тивĕçлĕ органсен треста вырăнти материалсем çителĕклĕ парса тăрас ыйтăва татса памалла.

Кăçал трест пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах задани илнĕ. Ялхуçалăх институчĕ валли çĕнĕ çуртсем тума 1,5 миллион тенкĕ уйăрса панă. Шупашкарта çĕнĕ больница, подинститут çурчĕсене, Улатăрта коммунальнăй электростанци тума палăртнă. Асăннă çуртсене тата ыттисене те ăнăçлă туса пĕтересси проектсемпе сметăсене çийĕнчех çырса хатĕрленинчен килет. Халĕхе ку ĕçсем япăх пыраççĕ. Треста пурĕ 7 пин кубометр йывăç, 8 пин кубометр хăйăр кирлĕ. Халиччен пурĕ те 60 кубометр йывăç, 150 кубометр чул турттарса кăларнă.

Çак кунсенче трест коллективĕ 1952 çулхи строительство планне срокчен тата пысăк пахалăхпа тултарма социализмлă обязательство йышăнчĕ. Трест руководителĕсен, партипе профсоюз организацийĕсен коллектив панă сăмаха пурнăçлама мĕн кирлине пурне те тумалла.

В. ДАНИЛОВ,
Чăваш коммунальнăй банк управляющийĕн заместителĕ.

Механизмсемпе лайăх усă курмалла

Пир-авăр комбиначĕ тăвакан çĕнĕ трестăн механизмсем нумай. Иртнĕ çулхине вĕсемпе çителĕклĕ усă курма пĕлмен. 1951 çулта строительство планне тултараймании, пуринчен ытла, механизмсен тăтăшах ĕçлемесĕр ларнинчен килнĕ.

Çуллахи кĕрӳ ĕç вăхăтĕнче бетон çăракан машинăсене хула тăрăх салатса янă пулнă: пĕрне промучастока лартнă, теприне—хула варринче пурăнмалли çурт тунă çĕре турттарса пынă.

Пысăк строительствăра çак машинăсене пĕр çĕре пуçтарса бетон хатĕрлекен тĕп вырăн тумалли, паллах, пысăк йăлăш пулнă.

Строительство управленийĕпе шестройком тунă коллективлă договор тăрăх, площадкăра пĕлтĕрех бетон хатĕрлекен тĕп вырăн тумалла пулнă. Анчах çак обязательствăна администраци пурнăçа кĕртмен. Рабочисем темиçе хут сĕннипе кăçалхи февраль пуçламăшĕнче тин стройплощадкăра бетон хатĕрлекен тĕп вырăн туса пĕтерчĕ. Апла пулин те, халлĕхе унта пĕр машина çеç ĕçлет. Пур участоксенче те кĕрӳ ĕç пынă вăхăтра, паллах, пĕр машина бетон çăрма ăлкĕреймест. Кунта халех тепĕр машина лартмалла. Уйрăм механизмсем вăхăтлăха пăрахăçа туххсан, вĕсене юсанă чухне ĕçлеттермелле резервра машина та пулмалла. Унсăрăн кăçал та пĕлтĕрхи йăнăшсене тепĕр хут тума тивĕ, пĕтĕм стройплощадкăри пур участоксенчен те хатĕр бетон ыйтма тытăнсан, механизмсем вăхăтлăха çеç чарăнса ларни те камешсене темĕн чухлĕ чăрмантарма пултарать.

Бетон хатĕрлесен, ăна строительсем патне илсе пырасси пысăк вырăн йышăнать. Февралĕн 15-мĕшĕнче, 3 сехет те 30 минутра, бетон хатĕрлекен цех начальникĕ **Пичужкин** юлташ çурт-йĕр участокне телефонпа шăнкăртаттарчĕ те,—Сире паян бетон тата кирлĕ пулать-и?—тесе ыйтрĕ. Ăерен татăклă ответ пачĕç:—Бетон кирлĕ мар.

Анчах 5 сехетре çурт-йĕр участокĕнчен бетон хатĕрлекен цех патне грузовик кĕрлеттерсе çитрĕ. Машина çинчен сиксе аннă мастер хашкаса Пичужкина шырама тытăнчĕ.—Тархасшăн пулăшăр, пире халех икĕ пичке бетон кирлĕ,—тесе хучĕ вăл.—Паян бетон пулмасть, апĕ рабочисене ĕç сукмипе пасăрах киле ăсатрăм,—тет Пичужкин юлташ.

Çакнашкал «кыскарасем» строительство площадкинче час-часах пулкалаççĕ. Кăçалхи прорабсен автомашина ыйтса нарăн çыраççĕ, ирхине машинăсем пырса тăрсан, нимĕн турттарма та тытăнмаççĕ—е грузчиксем çук е ăнер турттарма палăртнă материал паян кирлĕ марри палăрать. Ку мĕнтен килет-ши? Пирĕн шутпа, çакнашкал кирлевсĕрлĕх пĕтĕмпех диспетчер службин начар ĕçленинчен килет. Трест руководителĕсен диспетчер аппаратне халех йĕркелесе ямалла. Тепĕр енĕ уйăрăн, стройплощадкăри пур участоксемпе те кĕрӳ ĕç пуçлансан, йĕрпеллĕ диспетчер службисĕр кулленхи ĕçе ертсе пыма йывăр пулать.

Механизмсемпе çителĕклĕ усă курасси ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен килет. Пысăк хуçалăхра кашни участокрах оборудованишĕн ответлă руководитель пулмалла. Пĕлтĕр бетон çăракан машинăсем кунне 3—4 сехет усăсăр ларни уйрăм участоксенчи механизмсемшĕн ответлă çын пулманнинчен килнĕ. Кăçал çак йăлăша тепĕр хут тăвасси нчен сыхланмалла.

Машинăсемпе механизмсене уйрăм участоксенче усă курма проката пама ятарласа база тунă. Çак база аллинчи машинăсенчен пĕр участока бетон çăракан тата бетон шĕветекен машинăсем, крансем, локомобиль, чул ватакан машина, транспортерсем уйăрса панă. Участок коллективĕ çак машинăсене упраса ĕçлеттерессине пĕтĕмпех тăм çине илет, прокат бази механизмсене тĕпрен саласа юсамалли ĕçсене çеç тăвать. Ку питĕ те кирлĕ тата усăллă йĕрке.

Уйрăмах автотранспорт начар ĕçленине палăртас пулать. Январь уйăхĕнче грузсем турттармалли плана чылай тултарман, ку уйăхра та ĕç кирлĕ пек хăвăртлăхпа пулса пымасть. Атăл лешенчен йывăçпа хăйăр, Пионерăран—кирпĕч турттарса кăлармалли графика час-часах пăсаççĕ.

Трестăн бульдозер, катоксем пур. Вĕсемпе çула юрган тасатма пулать.

Автотранспорт начар ĕçлени—ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнинчен килет. Февралĕн 14-мĕшĕнче Атăл леш енчен йывăçпа хăйăр турттарса тăракан машинăсенчен çурт-йĕр участокне кирпĕч турттарма пĕр грузовик, чул турттарма—самосвал, йывăç турттарма—грузовикпа прицеп тата шĕвĕ бетон турттарма—самосвал уйăрса панă. Çак тăватă машина ирхине 8 сехетре гаражран тухать. Бетон турттарма пынă Костин шофера çурт-йĕр участокĕнче 8 сехетрен пуçласа 11 сехет çурăччен тытаççĕ те унтан «пире паян бетон кирлĕ мар» тесе кайма сĕнеççĕ. Çавăн пекех ытти виçĕ машина та грузсем тиесе пушатнă чухне усăсăр нумай тăраççĕ.

Промышленность участокне уйăрса паракан машинăсем те кунсерен ахаль нумай тăраççĕ. Февралĕн 14-мĕшĕнче ку участока янă пĕр машина (шоферĕ Сков юлташ) 8 сехетрен 10 сехет те 30 минутчен грузчиксем уйăрса паманнипе ахаль ларнă. Çав кунах кирпĕч турттарма 12 машина уйăрнă пулнă, грузчиксен ĕçне кирлĕ пек организацилеменнипе вĕсем те вăхăтра çаврăнса килеймен.

Çапла ĕнтĕ, диспетчерсен япăх ĕçлени, руководительсем çаврăнăçусăр пулни автомашинăсемпе тата ытти механизмсемпе усă курас ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме чăрмантарать. Строительствăра пуçарулă шоферсем сахал мар. Перфилов юлташ пĕр рейс тăвас вырăнне куллен иккĕшер рейс тăвать. Павлов, Геронтьев, Шатурный, Лебедев шоферсем ĕç нормине 160 процент таран тултараççĕ. Малта пыракан шоферсен опытне пропагандăлас тата сарас тĕлĕшпе кунта нимĕн те тумаççĕ темелле. Постройкомпа ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсен пуçарăвĕ çинчен февралĕн 15-мĕшĕнче çеç постройкомра сӳтсе явнă. рабочисем хушшинче сменăри задание срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва йĕркелемен.

Çак çитменлĕхсене пĕтермелле. Республикăри чи пысăк стройкăра ĕç нормине тултараймăн пĕр çын та, задание пурнăçлаймăн пĕр участок та пулмалла мар. Пир-авăр комбинатне правительство кăтартса панă срокра туса пĕтерессишĕн строительсен хушшинче социализмлă ăмăртăва çĕнĕ хăватпа вăйлатса яни кирлĕ.

А. ТАЛВИР.

Строительсен чыслă та ответлă тивĕçĕ

Улатăр хулинче промышленноçпа транспорт предприятийĕсем çултан-çул аталанаççĕ, çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланаççĕ. 1951 çулта вĕсене капитальнăй ĕçсем тума 11,3 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă.

Хулари парторганизаци государство уйăрса панă укçа-тенкĕпе вăхăтра тата туллин усă курассишĕн, строительство ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса пырассишĕн куллен тимлĕ кĕрешет, строительсене умра тăракан задачăсене чыслă пурнăçлама мобилизацилет.

Уйрăмах строительство тĕлĕшпе пăравуссем юсакан заводри парторганизаци паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. Партбюро строительство ĕçĕсем мĕнле пынипе куллен интересленет, рабочисем хушшинче массăллă-агитациллĕ ĕçе, социализмлă ăмăртăва вăйлатса пыма тăрăшать. Парторганизаци оборудованипе тата производство çурчĕсене юсас, çĕнĕ станоксене вырнаçтарса лартас ĕçе хĕле кĕриччен туса пĕтерессишĕн кĕрешме пĕтĕм коллектива мобилизацилерĕ. Завод 1951 çулхи строительство планне 103 процент тултарчĕ.

Пывăç ипаласем тăвакан комбинат пĕлтĕр электростанци, шкул туса лартрĕ. Кунта строительствăра механизмсемпе лайăх усă кураççĕ, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту аплă сарăлнă. Комбинат строительство планне ăнăçлă тултарнă, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тунă.

Махорка фабрики, атă-пушмак фабрики тата типографи те çĕнĕ çуртсем тумалли тата кивисене юсамалли плана ăнăçлă тултарнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр хуçалăх организацийĕсем государство уйăрса паракан укçа-тенкĕпе тулли усă курассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ, çуртсем лартмалли, оборудовани юсамалли плана тăтăш тултармаççĕ. «Водосвет» электростанци кивĕ дизельсене юсамалли плана тултармарĕ, çĕнĕ дизеле вырнаçтарса лартса ĕçе яраймарĕ. Электростанци хĕле япăх хатĕрленнипе хулара электричество энергийĕпе шыв çитмест, çавă предприятисене пысăк чăрмав кӳрет. Электростанцири партбюро асăннă çитменлĕхсене пĕтерме, строительство планне пурнăçлама коллектива мобилизацилемен.

Хăшпĕр чугун çул организацийĕсем те строительство планне тултарас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Узелти электростанцире оборудовани вырнаçтарса лартмалли плана тултарман.

Узелти парткомпа депори партбюро строительство ĕçĕпе интересленмеççĕ, ку ыйтăва хăйсен ларăвĕсенче сахал сӳтсе яваççĕ, коллектива плана тултарма мобилизацилемеççĕ.

Кирпĕч заводĕ, автотранспорт кантурĕ тата ытти хăшпĕр предприятисем капитальнăй ĕçсем тума уйăрса панă укçа-тенкĕпе тулли усă курман.

1952 çулта хулара строительство тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Коммунальнăй электростанци, кинотеатр, чугун çул станци урлă каçса çӳреме кĕпер тумалла, кирпĕч заводне çĕнетсе пысăклатмалла, черепица цехĕ уçмалла. Автомашинăсем юсакан мастерскойне, атă-пушмак фабрикине, хулари промкомбината пысăклатмалла. Хулари промкомбинат хут купăс тăвакан цех уçать. Унăн кăçал 1.000 купăс туса кăлармалла.

Предприятисем, мастерскойсем, çуртсем çĕнĕрен тумалли тата кивисене юсаса пысăклатмалли плана ăнăçлă тултарасси партипе совет общественносĕ ку ыйтупа тăтăш интересленнинчен, пуçламăш парторганизацисемпе ВКП(б) хула комитечĕ умра тăракан задачăсене пурнăçлама строительствăра ĕçлекен рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене большевикла мобилизацилениинчен килет.

И. ЕРЕМИН,
ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ.

ЮЛАШКИ ПОЧТĂРАН

Пурнăçа лайăх пĕлмесен...

Нумаях та пулмасть, Сĕнтĕр районĕнчи «Ĕç ялавĕ» хаçатра «Комсомол организацийĕсен ĕçне куллен ертсе пымалла» ятлă умстатья пичетленсе тухрĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, статьяри шухăшсем тĕрĕс. Хаçат пуçламăш парторганизацисене комсомол ĕçĕпе куллен интересленме, тимлĕ ертсе пыма, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешме чĕнет.

Анчах умстатьяри пысăк çитменлĕхсене палăртмасăр иртме çук. Унта пуçламăш парторганизацисем комсомол организацийĕсене ертсе пыни çинчен пĕр лайăх пример та илсе кăтартман. Статьяра тĕрĕс мар вырăнсем те пур. Акă, сăмахран, хаçат:

«Красный богатырь» колхозри пуçламăш комсомол организацинче 15 комсомолец шутланать. Анчах вĕсенчен 3-шĕ çулталăк хушши член укçи тӳлемен. Комсомол организацийĕн секретарĕ Т. Веселова çак ĕçре тивĕçлĕ ответлăх туймасть, 11 уйăх хушшинче 3 пуху кăна ирттернĕ»,—тесе çырать.

«Красный богатырь» колхозри комсомолецсем хăйсен организацийĕ çинчен «Ĕç ялавĕ» хаçатра çакăн пек çырнипе килĕшмеççĕ. Çапла тума вĕсен сăлтав та пур. Хаçатра статья пичетленнĕ тĕле «Красный богатырь» колхозри пуçламăш организацире 15 комсомолец мар, 20 комсомолец шутланнă, çулталăк хушши член укçи тӳлеменнисем пĕр çын та пулман. Вĕсем хăйсен пуçламăш организацийĕн секретарĕ пулма Ахмане ял Совечĕн секретарĕ пулса ĕçлекен çамрăк комсомолкăна Т. Веселова юлташа иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче суйланă. Çапла ĕнтĕ «11 уйăх хушшинче 3 пуху кăна ирттернĕшĕн» Веселова юлташа айăплани те тĕрĕс мар.

«Красный богатырь» колхозри комсомол пуçламăш организацийĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем пур. Анчах çитменлĕхсене ӳстерсе, фактсене пăсса кăтартни ĕçре пулăшмасть.

Кĕскен

ЙĔПРЕÇ. Районта ачасен библиотеки валли ятарласа çурт лартрĕç. Вара библиотека ĕçĕ чылай лайăхланчĕ. Библиотекăра 3 пин кĕнеке шутланать, унтан 410 ача кĕнеке илсе вулать. Халĕ, Н. В. Гоголь юбилейне хатĕрленнĕ май, çамрăк вулакансем аслă писатель произведенийĕсене нумай илсе вулаççĕ.

СĔНТĔР. «Путь Ильича» колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана иртнĕ çулхи декабрĕн 7-мĕшĕ тĕлне ирттерсе тултарнă. Колхозниксем вăрман турттармалли плана тултарас тĕлĕшпе те хастарлă ĕçленĕ. Январĕн 25-мĕшĕ тĕлне 1.220 фестметр вырăнне 1.275 фестметр турттарнă.

КУСЛАВККА. Кунта ялхуçалăх специалисчĕсен районти канашлăвне ирттерчĕç. Канашлура ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе 1952 çулхи задачăсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Г Петрухин юлташ доклад турĕ. Доклад тăрăх 11 çын тухса каларĕ.

Канашлура пулнисем 1952 çулта ăмăртса ĕçлеме социализмлă обязательство йышăнчĕç.

КОМСОМОЛЬСКИ. Ульянов ячĕпе тăракан колхозра П. Романов чылай вăхăт хушши пчеловод пулса ĕçлет. Вăл хуртхăмăр ĕçĕнче пысăк опыт туяннă.

1951 çулта хăйне çирĕплетсе панă 74 вĕллерен 86-шар килограмм пыл илнĕ.

Колхоз правленийĕ, ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, Романов юлташа 347 килограмм пыл панă.

ЧĂВАШ АССР ĕнчи РАЙОНСЕМ 1952 ÇУЛХИ 1-мĕш КВАРТАЛТА УКÇА-ТЕНКĔ ПУХМАЛЛИ ПЛАНА ФЕВРАЛĔН 16-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Пурĕ	Вăл шутран: Ялхуçалăх налогĕ	Вăл шутран: Хресченсенчен заем укçи пухнă
Муркаш	55,1	48,7	112,5
Чкаловски	54,3	57,9	25,7
Комсомольски	52,0	71,3	20,0
Чурачăк	52,0	113,9	24,4
Шупашкар	48,7	53,5	29,6
Ишлей	48,6	53,2	30,0
Çĕрпӳ	48,3	49,0	29,5
Елчĕк	48,2	61,6	30,8
Вăрнар	47,8	37,1	20,0
Калинино	47,0	43,0	29,4
Шупашкар хули	47,0	22,8	—
Улатăр хули	46,9	60,0	—
Улатăр	45,8	46,7	25,0
Канаш	45,3	51,5	21,8
Сĕнтĕрвăрри	44,2	64,7	32,6
Элĕк	43,2	61,0	26,7
Красноармейски	42,7	82,1	21,7
Канаш хули	42,2	33,4	—
Пăрачкав	42,1	36,2	11,1
Сĕнтĕр	40,9	41,2	42,7
Куславкка	40,3	42,3	20,9
Çĕмĕрле	39,1	30,1	16,6
Советски	38,8	39,1	33,1
Шăхасан	38,7	79,2	11,7
Йĕпреç	37,3	37,6	25,7
Вăрмар	36,6	36,3	14,0
Тăвай	36,6	52,6	35,2
Кувакино	35,5	38,7	80,0
Первомайски	34,2	35,8	8,3
Етĕрне	33,0	39,3	5,8
Шăмăршă	30,9	22,1	9,1
Октябрьски	30,6	59,8	11,8
Хĕрлĕ Чутай	22,6	22,3	4,6

Колхозлӑ ялӑн пӗр кунӗ

1. Ирхине

Каçхине колхоз правлени членӗсен ларӑвӗнче пулнӑ хӗрӳллӗ каласу пиллӗкмӗш бригадӑн бригадирне—А. Капирова сӗрӗпех канӑç памарӗ. Кӑçал тырпул тухӑçлӑхне ӳстермелли майсем çинчен сӳтсе явнӑ чухне колхозниксем минераллӑ удобренисем ытларах кӳрсе килме тата вырӑнти торф запасӗпе анлӑрах усӑ курма хушса хӑварнӑччӗ. Колхозри агротехник Василий Степанович, торф паханӑхне тӗрӗслесе, ӑна хӑш тата мӗнле культура акмалли уя ытларах кӑлармаллине те палӑртса хунӑ пулнӑ. Анчах торф кӑларас ӗç колхозра вӑраха кайнӑ. Çакна правлени членӗсен ӗнер пулнӑ ларӑвӗнче тӗплӗн сӳтсе явнӑ. Торф кӑларас ӗçе тепӗр кунпех тытӑнма коммунист Капиров юлташ ертсе пыракан бригадӑна хушса хӑварнӑ.

Çавӑнпа А. Капиров бригадир паян ытти чухнехинчен те чылай иртерех, шурӑмпуç киличчене тӑрса тухрӗ.

...Хӗллехи ир. Колхозлӑ ялӑн шӑплӑхне пӑсса Вӑрнар енчен поезд кӑшкӑртса иртрӗ. Çурçӗртен вӗрекен усӑ çил питрен кӑштах чӗпӗтет.

— Ӗçлеме аван кун пулать паян,—терӗ бригадир, ирхи çанталӑка сӑнаса.

Вӑл пынӑ çӗре конюхсем лашасене щӑварса сӗлӗ пама ӗлкӗрнӗ. Торф турттарма каякансем валли çунасем хатӗрлесе лартнӑ.

Тепӗр темиçе минутран лумсемпе кӗреçесем хунӑ лавсем ялтан тухса Çавал хӗррипелле кайрӗç.

Çав вӑхӑтра ялӑн тепӗр енчи итем çинче трактор кӗрлени илтӗнсе кайрӗ. Кунта иккӗмӗш бригада соломорезкӑпа улӑм турать.

— Илтетӗр-и, хӗрсем, улӑм туракансем, ӗçе тытӑнчӗç те. Тойлеряков бригадир, пирӗнпе ӑмӑртнӑ пекех, ӗçе ир тухнӑ,—тет малти лавпа пыракан София Ралова.

Лавсем торф кӑлармалли вырӑна пырса чарӑнчӗç. Колхозниксем малтанах юра хырса усрӗç. Бригадир А. Капиров юлташ лумпа катма тытӑнчӗ. Анчах торф шӑнман иккен, ӑна тимӗр кӗреçепех касса илме пулать.

— Вир пултӑр та мир пултӑр,—терӗ, Васса Яранцева,—малтанхи лав çине торф тиеме тытӑнса.

— Мирӗ пултӑр вӑл, питӗ аван, анчах торфлӑ тислӗк-компоста чи малтан кок-сагыз акмалли хире тӑкатпӑр,—тет ӑна Анна Матвеева.

Хӗрӳ ӗç пуçланать. Пӗрисем касса хӑпӑтаççӗ, теприсем тиеççӗ. Тулли лавсем пӗрин хыççӑн тепри хирти тислӗк купи еннелле каяççӗ.

— Хӗрсем, паян миçе лав турттарма пулатпӑр,—тет Н. Ефимов колхозник, лашине тиемелли вырӑна çавӑрса.

— Наряд тӑрӑх 30 лавран кая мар турттармалла. Ытлашшине хӑвӑр пӗлӗр, вӑл сирӗн хастарлӑхран килет,—терӗ бригадир.

— Пирӗн хастарлӑхӗ çителӗклӗ. Заданипе ирттерсе тата вунӑ лавран кая мар турттаратпӑр,—килӗшеççӗ хӗрсем.

Шӑп çав вӑхӑтра колхозра радио каласма пуçлать. Малтан Мускаври Кремль башни çинчи сехет улттӑ çапни, унтан Совет Союзӗн Гимнӗ илтӗнет. Тӑван çӗршыв столици Мускав çӗнӗ хыпарсем пӗлтерме тытӑнать. Çав вӑхӑтра колхозниксен килӗсенче тата обществӑллӑ çуртсенче репродукторсем умӗнче çынсем шӑппӑн итлесе ларнине куратӑн. Радио коммунизмӑн аслӑ стройкисенчи строительсем, Магнитогорскри металлургсем, Белоруссинчи колхозниксем, Донбасри шахтерсем, Карели вӑрманӗнче ӗçлекенсем тунӑ чаплӑ çитӗнӳсем çинчен савӑнӑçлӑ хыпарсем пӗлтерет. Тӑван çӗршыв иртнӗ кун тунӑ чаплӑ çитӗнӳсем пурне те савӑнтараççӗ тата лайӑхрах ӗçлеме хавхалантараççӗ.

Фермӑсенче, лаша витисенче, колхозӑн мастерскойӗсенче, электростанцире, арманта, хирте—пур çӗрте те ӗç вӗрме тытӑнать. Колхозлӑ ялӑн ӗç кунӗ пуçланать.

2. Фермӑра

Колхозпа юнашарах çӗнӗ те пысӑк витесем, пӗлтӗр кӑна туса пӗтернӗ силос башни, фермӑсенче ӗçлекенсем пурӑнакан пӳртсем илемлӗн курӑнса лараççӗ. Картишсенче ӑратлӑ сыснасемпе сурӑхсем, ӗнесем. Колхоз обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли виçӗ çуллӑх плана, лашасемсӗр пусне, ытти выльӑхсем енӗпе иртерсе тултарнӑ. Халӗ колхозӑн фермисенче майракаллӑ шултӑра выльӑхсем 237 пуç, 329 сысна, 453 сурӑх, хурсемпе чӑхсем 1.619 пуç шутланать.

Фермӑсенче ӗçлекенсемшӗн çак юлашки кунсем питех те ответлӑ пулчӗç. Кашниех çамрӑк выльӑхсене тӗрӗс-тӗкӗл илсе юлас тесе кунне-çӗрне пӗлмесӗр сыхӑ пулчӗ. Паян Ульяна Галкинӑн пысӑк савӑнӑç. Вӑл хӑй пӑхакан 14-мӗш ӗнерен пӑру илчӗ.

— Эпӗ фермӑра тӑватӑ çул доярка пулса ӗçлетӗп. Пӗлтӗр 13 ӗнерен 13 пӑру илсе патӑм. Кашни ӗнерен вӑтам шутпа 1 489 литр сӗт суса илнӗ. «Маня» ятлӑ ӗнерен икӗ пин литр ытла сӗт илтӗм. Кӑçал тата ытларах суса илессишӗн тӑрӑшатӑп,—тет вӑл.

Ульяна Галкина хӑйӗн сӑмахне ӗçре пурнӑçлама тӑрӑшать. Çав майпа малта пыракансен ӗç опытне вӗренет. Зооветкурсра вӑл чи лайӑх вӗренекенсенчен пӗри. Унсӑр пуçне У. Галкина журналсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, вӗсен тухӑçне ӳстерес ыйтусем тӑрӑх çырнӑ статьясене тӑрӑшса вулать. Паян вӑл «Социалистическое животноводство» журналта пичетленнӗ «Красный коллективист» колхозри доярка, Социализмлӑ Ӗç Геройӗ Ф. Я. Шутовӑн «Манӑн ӗне сумалли практика» ятлӑ статьине тӗплӗн вуласа тухма палӑртнӑ.

— Акӑ, çынсем кашни ӗнерен 4.882 е 9 267-шер литр сӗт суса илеççӗ. Пирӗн те вӗсем пекех ӗçлемелле. Çакна тума ăпре вӗренни, ӗçе тума пӗлни çӑна çитмест,—тет вӑл. Çавӑнпа кунта фермӑра ӗçлекен кашни колхозница зооветкурсра тӑрӑшса вӗренет. Занятисем эрнере пӗрре кашни тунтикун пулса иртеççӗ. Курсра вӗренни хӑйӗн паха результачӗсене кӑтартрӗ те ӗнтӗ. Чылай дояркӑсем ӗнесене лайӑхрах пӑхакан, сӗт ытларах суса илекен пулчӗç.

Дояркӑсем ӗнесене сунӑ хыççӑн лайӑх пӗçерсе çемçетнӗ улӑмпа пӑтратса панӑ. Кӗçех вӗсене усӑлтарма илсе тухмалла. Çав вӑхӑтра пӳрте ферма заведующийӗ М. Яковлев пырса кӗрет. Вӑл иртнӗ уйӑхра хӑш доярка миçе литр сӗт суса илнине каласа парать, кӑтарту хӑми çине паллӑ тӑвать. Ульяна Галкина иртнӗ уйӑхра 2.002 литр, Анна Васильева 1 682 литр, Римма Тыкина 1 386 литр, ытти дояркӑсем 1.000—1.200-шер литр сӗт суса илнӗ.

Фермӑри выльӑх-чӗрлӗхсене лайӑх пӑхма пур майсем те туса панӑ. Ӗнесене кулленех çителӗклӗ тӑран утӑ-улӑм, 10-шар килограмм силос параççӗ. Сыснасене апат пӗçерсе пама ятарласа кухня ӗçлет. Унта фермӑри сыснасем валли кирлӗ чухлех апат хатӗрлеççӗ.

— Иртнӗ кунсенче эпир кулленех 2—3 пӑру, вуншар путек кӗтсе илеттӗмӗр. Халӗ ӗнесем чылайӑшӗ пӑрурӗç. Çамрӑк выльӑхсем илмелли плана иртерсе пурнӑçлатпӑр,—тет фермӑсен заведующийӗ.

* * *

Ытти бригадӑсенче те ӗç пӗр чарӑнмасӑр вӗрсе пырать. Ӗçе тухнӑ кашни колхозникпа колхозница кун каçиччен тухӑçлӑ ӗçлесе, задание иртерсе тултарма тӑрӑшать. Улӑм туракан агрегат иртен пуçласа каçчен пӗр чарӑнмасӑр ӗçлерӗ. Санталлӑк сивӗрех пулчӗ те, транспортер çине улӑм хуракансем çарамаслансах ӗçлеççӗ.

— Эсӗ, Иван, ывӑнма пӗлместӗн пулӗ, çакӑн пекех ӗçлесен, улӑм çитмест пире, турттаракансем те ӗлкӗреймеççӗ,—тет Лиза Сергеева пит çинчи тарне шӑлса.

— Эсир кунта уçӑлса çӳреме тухман пулӗ. Паян заданирен иртерсе пӗр тонна улӑм турттармалла пирӗн, çавна ан манӑр,—ӑстутарать тракторист И. Яковлев.

Мария Андреевӑпа Нина Николаева улӑм турттаракансене хӑвӑртрах ӗçлеме чӗнеççӗ.

Пӗрремӗш бригада çав кун лаша витисемпе выльӑх-чӗрлӗх фермисем патне утӑ турттарчӗ.

Утӑ вапавӗ патне лав хыççӑн лав пырса тӑрать. Тиенӗ чухне çил утӑна вӗçтерет. Анчах кунта пӗр килограмм утта та çухалма памаççӗ. Кашни килограмм утӑ-улӑма шута илнӗ. Выльӑх апатне мӗнле расходланине колхоз председателӗ хӑй тӗрӗслесе тӑрать.

3. Ӗçчен çемьесем

> «...Колхоз строительствине сарса яма тата кивӗ тӑлӑсенчен хӑтӑлма сирӗн мӗн кирли пурте пур.
>
> Сирӗн пӗр çакна кӑна тумалла—тӳрӗ кӑмӑлпа ӗçлемелле, колхоз тупӑшӗсене ӗç тӑрӑх валеçмелле, колхоз пурлӑхне упрамалла, тракторсемпе машинӑсене упрамалла, лашасене лайӑх пӑхса усрамалла, хӑвӑрӑн рабочисемпе хресченсен государствин заданийӗсене пурнӑçа кӗртсе пымалла, колхозсене çирӗплетсе пымалла...»
>
> *(И. В. Сталин. Колхозник-ударниксен Пӗтӗм Союзри пӗрремӗш съездӗнче 1933 çулхи февралӗн 19-мӗшӗнче калана сӑмахран).*

Яранцевӑсен çемйинче ӗçлеме пултаракансем виçӗ çын. Пурте вӗсем паян колхоз производствине хастарлӑ хутшӑнчӗç. Кун хӗрӳ ӗçре иртрӗ. Мария Яранцева иртен пуçласа каçчен тислӗк тиерӗ. Вӑл ытти колхозницӑсем пекех ӑмӑртса ӗçлерӗ.

Унӑн хӗрӗ—Анастасия хире тислӗк турттарчӗ. Торф турттаракансемпе ӑмӑртса ӗçлесе, вӑл пӗр кунхи заданине иртерсе тултарчӗ, заданирен иртерсе темиçе лав тислӗк кӑларчӗ.

Яранцева Вассӑн ӗç кунӗ пуринчен тухӑçлӑрах ӗçленипе иртрӗ. Вӑл торф кӑларнӑ çӗрте ӑмӑрту пуçаракан пулчӗ. Пӗрле торф касакан Анна Матвеевӑпа ӑмӑртса ӗçлесе, кулленхи заданине чылай иртерсе пурнӑçларӗ. Хӗллехи кӗске кунта та икӗ ӗçкунӗ ялан ӗçлесе илчӗ.

— Эпир пӗлтӗр колхозра ӗçлесе кашнинех 160—250-шар ӗçкунӗ турӑмӑр, тырпул, укçа-тенкӗ çителӗклӗ илтӗмӗр. Колхозри тулӑх пурнӑçра никӗн çитменнине те курмастпӑр,—теççӗ ӗçчен çемьере.

Çавӑн пекех Василий Степанович Капиров çемйишӗн те паян тухӑçлӑ ӗç кунӗ пулчӗ. Çемьере пилӗк çын пурте ӗçе хутшӑнчӗç. Вӗсен çемйи пӗлтӗр 1.342 ӗçкунӗ туса колхозран 200 пӑт ытла тӗштырӑ, пин тенке яхӑн укçа, пыл, пахча çимӗç тата ытти çимӗçсем те нумай илнӗ.

Çавӑн пек çемьесем кунта килӗренех. Пурте вӗсем колхоз ӗçне хастарлӑ хутшӑнаççӗ. Хӑйсен колхозне тӗреклетессишӗн ырми-канми кӗрешеççӗ.

Колхозра стахановла ӗçлени, тӳрӗ кӑмӑллӑ пулса государство, общество интересӗсене сӳпле тытни вӗсене тулӑх та культурӑллӑ пурнӑçа илсе пырать. Çавӑн пек пурӑнать кунта кашни çемье. Вӗсен таса ӗмӗчӗ тата та пысӑк. Хӑлӑх хуçалӑхне пӗтӗмпех юлашки вӑрçӑ çинчен мар, телейлӗ пурлӑх ӗç çинчен шухӑшлаççӗ вӗсем. Çавӑнпа колхозлӑ ял çыннисем хӑйсен чи юратнӑ çыннине, мир ялавне, халӑх телейне çирӗп тытакан аслӑ Сталин ятне пӗтӗм таса кӑмӑлпа юратса асӑнаççӗ.

4. Тӑрӑшса ӗçленӗ кун итогӗсем

Кун каçалла сулӑнчӗ, пӗтӗм тавралӑха тӗттӗм сӑн çапрӗ. Колхозниксем ӗç хыççӑнхи ырӑ туйӑмпа хавасланса киленсе таврӑнаççӗ. Тухӑçлӑ та пархатарлӑ ӗç пурне те савӑнтарать, ыран паянхинчен те лайӑхрах ӗçleme вӑй хушать. Çав вӑхӑтра колхозӑн пӗр гидроэлектростанцийӗ ала электроэнерги пама тытӑнать. Пӗр вӑхӑтрах обществӑллӑ çуртсенче, колхозниксен килӗсенче, урамсенче çӗршер электролампочка çутӑлса каять. Колхозлӑ яла касхи хула илемӗ кӗчӗ.

Бригадирсемпе ферма заведующийӗсем колхоз правленине пухӑнаççӗ. Пӗрне çавӑн пек кунта—ӗç кунӗ вӗçленнӗ хыççӑн кашни бригадирпа ферма заведующийӗ хӑйӗн туна ӗçӗ çинчен правленире каласа парать.

Пурте пухӑнса çитнӗ.

— Паян мӗн ӗç тунине пӗтӗçтерсе пӑхӑпӑр,—пӗлтерет председатель Н. Петров юлташ.

— Каласа парӑр, Данилов юлташ,—тет вӑл пӗрремӗш бригадӑн бригадирӗ çине пӑхса.

— Паян мӗн тума пӑхнине бригада пӗтӗмпех пурнӑçларӗ. Фермӑра выльӑхсем валли 68 центнер утӑ турттарса патӑмӑр. Ӗçе тухнӑ пур колхозниксем те тимлӗ ӗçлерӗç.

— Эпир заданирен иртерсе 7 лав торф кӑларса турттартӑмӑр. Унсӑр пуçне бригада хире 46 лав тислӗк кӑларчӗ. Бригадӑра 36 çын ӗçе хутшӑнчӗ, пурте заданине иртерсе тултарнӑ,—пӗлтерет 5-мӗш бригада бригадирӗ А. Капиров юлташ.

— Улӑм туракансем кулленхи заданирен иртерсе пӗр тонна улӑм турӗç. Халӗ пурӗ 100 тонна яхӑн улӑм туранӑ,—пӗлтерет А. Тойлеряков бригадир.

Бригадирсем хыççӑн ферма заведующийӗсем каласа параççӗ. Председатель кашнин сӑмахне тимлесе итлет, тетрадь çине çырса пырать. Унтан вӑл паянхи ӗç кунӗн итогне тума тытӑнать.

— Пӗтӗмӗшпе илсен, паян мӗн тума палӑртнине пурне те пурнӑçланӑ,—тет вӑл.—Анчах паянхи ӗçре çитменлӗхсем те сахал мар. Эпир парторганизаципа секретарӗпе Г. Матвеев юлташпа бригадӑсенче, фермӑсенче пултӑмӑр. Вӑрман хатӗрлеме çуррӑн кайма палӑртнисем пурте тухса кайман. Вӗсене ыранах кайма хушас. Ку ӗçшӗн бригадирсем ответлӑ. Фермӑри кухньӑра таса мар, уравӗнче шыв. Çак çитменлӗхсем ыран ан пулччӑр. Торф кӑларас ӗçе малашне ытти бригадӑсене те ытларах хутшӑнтармалла. Торф пӗтӗм çийӗпех илсе кӑлармалла. Ыран пирӗн тата ытларах та тухӑçлӑрах ӗçлемелле. Мӗн тумаллине эсир ӗç планӗсемпе паракан тӑрӑх пӗлетӗр. Правлени панӑ заданине пурте ӑнӑçлӑ пурнӑçласса шанатӑп.

Çак вӑхӑтра сӗтел çинчи телефон шӑнкӑртатать. Колхоз председателӗ Н. Петров юлташ телефон трубкине илет.

Каласу ытла вӑрӑма тӑсмарӗ. Пурне те çур сӑмахранах ӑнланнӑ пек Н. Петров юлташ. «Пулӗ, куратпӑр, тӑватпӑр, пурнӑçлатпӑр», тесе ответлерӗ.

— Парти райкомӗнчен пӗлтерчӗç. Жданов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем вӑрман хатӗрлес плане мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне 100 процент тултарма пулнӑ, пире социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнеççӗ,—терӗ вӑл.

— Питӗ лайӑх хыпар,—терӗ сӑмах илсе парторганизаци секретарӗ Г. Матвеев юлташ.—Эпир ӑна хавасланса йышӑнма пултаратпӑр. Пирӗн колхоз çул хӗррине 3.000 фестметр турттарса туса илмелле тултарчӗ. Турттармалли 60 фестметр кӑна юлнӑ. Эпир, вӑрман хатӗрлемелли плана Совет Çарӗн кунӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех тултарса, Тӑван çӗршыва планран иртерсе йывăç хатӗрлесе пама пултаратпӑр. Çак ӗçре, паллах, коммунистсемпе комсомолецсем малти ретре пулӗç.

Правлени членӗсемпе бригадирсем хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене туса калаççӗ. Улттӑмӗш бригадӑн бригадирӗ коммунист В. Шукин, вӑрман турттаракан И. Лукков тата ыттисем те вӑрман хатӗрлемелли плана Совет Çарӗн кунӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех тултарма, Тӑван çӗршыва планран иртерсе йывăç хатӗрлесе пама кирли çинчен калаççӗ.

Пур майсене те тӗплӗ сӳтсе явнӑ хыççӑн колхоз правленийӗ сезон планне Совет Çарӗн кунӗ тӗлне пӗтӗмӗшпе тултарма, планран иртерсе 300 фестметр йывăç касса хатӗрлеме, 200 фестметр çул хӗррине илсе тухма тата 70 фестметр турттарса тухма обязательство йышӑнать. Çакӑн çинчен ыранах колхозниксене пӗлтерсе вӑрмана массӑллӑн ӗçлеме каяссине организацилеме кирлине палӑртать.

Паянхи ӗçсен итогӗсене туса пӗтерӗ, ыран мӗн тумаллине палӑртнӑ. Бригадирсемпе правлени членӗсем килӗсене саланаççӗ. Правленире колхоз председателӗ Н. Петровпа парторганизаци секретарӗ Г. Матвеев кӑна.

5. Çӗнӗ çитӗнӳсемшӗн

— Çак кунсенче пирӗн колхозра районти колхоз председателӗсен канашлӑвӗ пулать. Вӗсем, паллах, пирӗн колхоз хуçалӑхӗпе паллашӗç, çитменлӗхсене кӑтартса парӗç, пулӑшӗç. Анчах вӗсене хамӑр колхоз, унӑн çыннисем çинчен каласа памаллах ӗнтӗ. Мӗнпе мухтанӑпӑрха эпир хӑнасем умӗнче?—терӗ Н. Петров парторганизаци секретарьне.

— Иртнӗ çулхи итогсем начар мар пирӗн. Пирӗнтен те, вӗсенчен те вӗренмеллисем пур.

Чӑн, колхозӑн иртнӗ çулхи итогӗсем начар мар. Колхоз хуçалӑхӗпе, унӑн ӳсӗмӗпе паллашсан, вӗсене питӗ аван куратӑн.

Колхоз халӗ 371 хуçалӑха пӗрлештерсе тӑрать. Колхозӑн тырпул тухӑçлӑхӗ те, выльӑх-чӗрлӗх йышӗ те çултан-çул ӳссе пырать. Кӑçал колхоз 304 гектар çинчен ыраш вӑтам шутпа пӗр гектартан 15,7-шер центнер, кӗрхи тулӑ 19,9 центнер, çурхи тулӑ 15,2 центнер, сӗлӗ 13,5 центнер туса илнӗ.

Колхоз пӗлтӗр государство умӗнчи обязательствӑсене пур енӗпе те срокчен тата иртерсе пурнӑçланӑ.

Колхозӑн укçа-тенкӗ тупӑшӗ те çултан-çул ӳссе пырать. Пӗлтӗр плапа 391.650 тенкӗ тупӑш илме пӑхнӑ пулсан, 425.274 тенкӗ тупӑш илнӗ. Колхоз утарӗнче 385 вӗлле шутланать, вӗсем кӑçал пыл нумай панӑ.

Пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илни, йышлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетни, хушма хуçалӑха аталантарса пыни колхозниксен ӗçкунӗсем çине тивекен тупӑша чылай ӳстернӗ, колхоз хуçалӑхне вӑйлатма май панӑ. Пӗлтӗр кашни ӗçкунӗ çине 2.5-шер килограмм тӗштырӑ, 70 пус укça, 20 грамм пыл, пахча çимӗç нумай валеçнӗ.

Колхоз хуçалӑхне вӑйлатас тӗлӗшпе те çулталӑк хушшинче сахал мар ӗçленӗ. 350 пуç вырнаçмалӑх сурӑх вити, кайӑк-кӗшӗк вити, силос башни, кинобудка, гараж, пурӑнмалли çуртсем тунӑ. Икӗ автомашина, ӑратлӑ выльӑхсем, тӗрлӗ ялхуçалӑх машинисем нумай туяннӑ. Нумай колхозниксем хӑйсем валли çӗнӗ те илемлӗ, пысӑк çуртсем лартнӑ. Колхозниксен килӗсене икӗ гидроэлектростанци çутӑ парса тӑраççӗ.

Колхоз халиччен тунӑ çитӗнӳсемпе лӑпланса лармасть, кӑçал тата çӗнӗ çитӗнӳсемшӗн кӗрешет. Тырпулпа выльӑх-чӗрлӗх тухӑçлӑхне ӳстерес, фермӑсенчи ӗçсене механизацилес тӗлӗшпе нумай ӗçлеме палӑртнӑ.

Тырпул тухӑçлӑхне ӳстерес майпа минераллӑ удобренисем кирлӗ чухлех кӳрсе килнӗ, вырӑнти удобренисене кулленех хатӗрлетпӗр. Колхоз кӑçал хуратул, вир чылай акма, вӗсен тухӑçлӑхне нумай ӳстерме пӑхнӑ. Эпир пӗр гектартан вир 25 центнертан, кок-сагыз 22 центнертан, тымарçимӗç 300 центнертан кая мар туса илетпӗр. Пӗрчӗллӗ культурӑсен тухӑçлӑхне те нумай ӳстеретпӗр. Çавсене тума пирӗн пур условисем те çителӗклӗ.

Пирӗн дояркӑсем кашни ӗнерен 1.500 литртан кая мар сӗт, сурӑх пӑхакансем кашни пуçран 3.5 килограмм çӑм касса илессипӗн тата чӑх-чӗп фермине ӗçлекенсем кашни чӑхран 90 çӑмарта илессишӗн кӗрешеççӗ. Эпир çав задачӑна пурнӑçлатпӑрах.

Обществӑллӑ хуçалӑха вӑйлатса чул юпаллӑ вите, свинарник, бетонран силос траншейӗ тумалла, фермӑсене водопровод кӗртмелле, автопоилка туса пӗтермелле, электричество вӑйӗпе ӗçлекен хӑма сурмалли рама, çу завочӗ т. ыт. тумалла. Çак строительствӑсене пурнӑçлама колхозра кирпӗч тӑвассине йӗркеленӗ. Кӑçал 300 пин кирпӗч туса кӑларатпӑр.

Çитес çуракине хатӗрленсе ялхуçалӑх машинисене юсаса пӗтернӗ. Ут хатӗрӗсем çителӗклӗ, юсавлӑ. Вӑрлӑх çителӗклех хатӗрленӗ, сортласа тасатнӑ.

Колхоз членӗсем И. В. Сталин юлташ колхозник-ударниксен Пӗтӗм Союзри пӗрремӗш съездӗнче каланӑ сӑмахра кӑтартса панисене чысӑн пурнӑçласа пыраççӗ. Колхоз тӗреклӗ, колхозниксем пуян та культурӑллӑ пурӑнаççӗ.

6. Колхоз клубӗнче

Каçхине колхоз клубне ваттисем те, çамрӑксем те нумай пуçтарӑнчӗç. Хӑшӗсем вӑрӑм сӗтел хушшинче çӗнӗ хаçат-журналсем вулаççӗ, теприсем хӗрсех шашкӑлла е шахматла выляççӗ. Пӗр ушкӑн хӗрсемпе каччӑсем коммунизмӑн аслӑ стройкисен картти патне пуçтарӑнса тӑнӑ.

— Атӑлпа Дон хушшинчи судноходство çӳремелли канал кӑçал ӗçлеме пуçлать,—тет каласу ирттерекен шкул директорӗ М. Гурьев юлташ.—Халӗ кунта Цимлянски тинӗс пулмалли вырӑна шыв тулать. Кӗçех эпир Шупашкар пристанӗнче пӑрахут çине ларса Атӑл тӑрӑх çав каналпа Дон çине, унтан Азов тинӗсӗпе Хура тинӗсе тухма пултарӑпӑр.

Каласу вӑйлансах пырать, унта çамрӑксем те, ваттисем те хутшӑнаççӗ. Вӗсем утакан экскаваторпа, Сталинградри тата Куйбышеври гидроэлектростанцисене туса пӗтерсен Çавал шывӗ мӗнле пуласипе тата ыттисемпе те интересленеççӗ.

Колхоз библиотекинче те çынсем нумай. Вӗсем çӗнӗ кӗнекесем улӑштарса илеççӗ.

— Мана А. Пушкинӑн «Евгений Онегин» поэмине парӑр,—тет С. Грачев комсомолец. Е. Мальцевӑн «Пӗтӗм чӗререн» кӗнекине тавӑрса парса.

— Тӑлӗнчелле лайӑх кӗнеке. Пурнӑçа, Тӑван çӗршыва юратма вӗрентекен кӗнеке, ӑна çемйипе пухӑнса вуласа тухрӑмӑр,—тет М. Лудкова колхозница Полевойӑн «Чӑн-чӑн этем çинчен çырнӑ повесть» кӗнекине тавӑрса парса.

Библиотекӑри кӗнекесен илсе вулакансен хисепӗ ӳссех пырать. Халӗ кунта 351 çын кӗнекесем илсе вулаççӗ.

Клуба çынсем пырсах тӑраççӗ. 250 çын вырнаçмалӑх зал халӑхпа лӑках тулать. Клуб заведующийӗ П. Кошкин паян «Юлташлӑхпа туслӑх» тема тӑрӑх лекци, ун хыççӑн концерт пуласси çинчен пӗлтерет.

Пӗр шавламасӑр, тимлӗн итлерӗç лекцие клуба пухӑннисем. Лекци хыççӑн ыйтусем паракансем, тухса калаçакансем те чылай пулчӗç.

Клуб çумӗнчи хор коллективӗ паракан концертсене колхозра кӑна мар, район центрӗнче те юратса итлеççӗ. Вӗсем художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсен смотрне пӗрре кӑна мар хутшӑннӑ. Хорта пӗтӗмпе пекех колхозӑн кулленхи ӗçне хастарлӑ хутшӑнакан çамрӑксем юрлаççӗ.

Конферансье П. Кошкин концерт пуçланни çинчен пӗлтерет. Хор колхозлӑ ял хресченӗсене телейлӗ те тулӑх пурнӑç панӑ аслӑ Сталин çинчен хунӑ юрра хаваслӑн та мӑнаçлӑн юрлать. Залри халӑх çак юрра нумайччен тӑвӑллӑн алӑ çупса кӗтсе илет.

Колхоз хорӗ аслӑ çулпус Сталин çинчен, Тӑван çӗршыв, мир çинчен, колхозри тулӑх пурнӑç çинчен çырнӑ чӑвашла тата вырӑсла юрӑсене ӑста юрласа парать.

Ун хыççӑн ташӑсем пуçланаççӗ.

Концерт вӗçленчӗ. Вӑхӑт çурçӗртен иртнӗ ӗнтӗ. Клубри халӑх пӗр-пӗрне ырӑ каç сунса вӑраххӑн килелле саланать.

Çурçӗр иртни çур сехет. Тӑван çӗршыв столици Мускав каллех радио тӑрӑх çӗнӗ хыпарсем пӗлтерме тытӑнать. Кашниех Тӑван çӗршыв чӗринчен, аслӑ Сталин пурӑнакан хуларан паракан çӗнӗ хыпарсене итлеме васкать. Мускав пӗлтерекен савӑнӑçлӑ хыпарсенче, Тӑван çӗршыв паян тунӑ ӳсӗмçенче колхозлӑ чӑваш ялӗнче тунӑ пӗчӗк ӗç те вырӑн йышӑннине туяççӗ. Мускав сассине итлесе, кашни ӗçчен колхозник коммунизмӑн аслӑ юрӑçи В. Маяковский сӑмахӗсемпе:

Савӑнатӑп!
Вӑл манӑн
вӑй-халӑм
Хутшӑнать
Республика ӗçне —

тесе калать.

Колхозлӑ ял шӑпланчӗ. Хуралçӑсем кӑна хӑйсен вырӑнӗсенче колхоз пурлӑхне çирӗп сыхлаççӗ. Ял варринчи пӗр килте çапах çутӑ сӳнмен. Ку колхоз председателӗн Н. Петровӑн килӗ. Вӑл вӗренет, умра В. И. Ленинпа И. В. Сталин произведенийӗсем.

* * *

Çапла иртрӗ колхозлӑ ялӑн пӗр кунӗ. Кунта кашни кун хастарлӑ ӗçпе палӑрса тӑрать. Кашни кун мӗн те пулин çӗннине илсе килет. Çакӑ вӑл пирӗн Тӑван çӗршыв кулленех коммунизм патне çывхарса пынине кӑтартса парать.

Н. МИНИН.

Хрушев ячӗпе тӑракан колхоз, Вӑрнар районӗ.

Колхозӑн выльӑх-чӗрлӗх фермисенче, уй-хирте, хушма хуçалӑхӗнче иртен пуçласа каçчен хӗрӳ ӗç вӗрет. Кашни колхозникпа колхозница хӑй ӗçне юратса тӑвать.

УКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: сулахайран сылтӑмалла — сурӑх ферминче ӗçлекен К. Зубова колхозница сурӑхсене утӑ парать. Вӑл пӗлтӗр кашни 100 сурӑхран 106 путек илсе пӑхса ӳстернӗ. Варринчи ӳкерчӗк çинче колхозри парторганизаци секретарӗ Г. Матвеев, колхоз председателӗ Н. Петров тата 5-мӗш бригада бригадирӗ А. Капиров юлташсем торф кӑларнӑ çӗрте. Сылтӑмра—улӑм туракан Зоя Феофанова ӗçре. Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Колхоз хроники

✪ Колхозпа ял Совечӗ шкул валли икӗ хутлӑ çурт тума хатӗрленеççӗ. Паян вӗсем строительство валли 600 фестметр йывăç илчӗç.

✪ Кунта Вӑрнарпа Калинино районӗсенчи колхозсенчи пчеловодсен курсӗ ӗçлеме пуçларӗ. Çитес кунсенче курсантсем колхоз утарӗнче практикӑллӑ ӗçре пулаççӗ.

✪ Васса Башмакова колхозницӑн паян пысӑк савӑнӑç. Акушер пунктӗнче вӑл пиллӗкмӗш ача — ывӑл çуратрӗ.

✪ Кӑнтӑрлапа ялти письмоносец Иван Краснов çӗнӗ хаçат-журналсем илсе килчӗ. Паян колхоза 200 экземпляр хаçат, 36 экземпляр журнал, 47 çыру килчӗ, переводсемпе бандерольсем те сахал мар.

✪ Радиопа Вӑрманкас ял Советне Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Облпрофсоветӑн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне памалла тунӑ çинчен пӗлтерчӗç. Çав кун ял Советӗнче 60 çынна яхӑн пулчӗ.

Колхоз хроники

✪ Паян колхозри паллӑ доярка Римма Тыкинӑпа Николай Григорьевшӑн асран тухми кун. Вӗсем иккӗшӗ мӑшӑрланчӗç, ял Советне пырса çырӑнчӗç.

✪ Пӗр кун хушшинче библиотекӑран 16 çын пырса кӗнекесем улӑштарнӑ, вӗсем 21 кӗнеке вулама илнӗ.

✪ Колхоз ӗçне хастарлӑ хутшӑнакан Николай Давыдовпа Иван Краснов Ленинпа—Сталинла комсомол ретне илме ыйтса заявлени панӑ.

✪ Ял Советне государствӑран пособи илме 32 çын пынӑ, вӗсене икӗ пин тенке яхӑн пособи панӑ.

✪ Колхозри спортсменсен команди И. В. Сталин ячӗпе ирттернӗ йӗлтӗрçӗсен массӑллӑ кроссӗнче куçса çӳрекен хӑмач илме тивӗçлӗ пулнӑ. Çак команда йӗлтӗрçӗсен районти ӑмӑртӑвне хутшӑнма хатӗрленсе 10 километра тренировкӑна кайса килнӗ.

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ Монголи халăхне чĕнсе калани

УЛАН-БАТОР, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çинче «Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин мĕнпур членĕсене тата Монголири пĕтĕм халăха чĕнсе калани» пичетленсе тухнă.

Чойбалсан маршал вилнĕ хыççăн çырнă çав чĕнÿре партин мĕнпур членĕсене, Монголи Халăх Республикинчи мĕнпур рабочисемпе работницăсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнакансене, халăх интеллигенцине, çамрăксене тата мĕнпур ĕçсыннисене Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕпе халăх правительстви тавра тата тачăрах пĕрлешме, халăх хуçалăхĕн планĕсене ирттерсе тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса тата пĕтĕм хастарлăхпа тăрăшса ĕçлеме, халăх хуçалăхĕпе культурăра пур енĕпе те çитĕнÿсене ÿстерсе пыма чĕннĕ. «Пирĕн пĕтĕм халăх юратнă тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пĕтĕм вăя хурса творчествăллă тата пултаруллă ĕçлени, кашни ĕçсынни хăйĕн вырăнĕнче тÿрĕ кăмăлпа тата чунтан тăрăшса ĕçлени хамăрăн хаклă та юратнă Чойбалсан юлташа асăнса пурăнмалли чи лайăх памятник пулĕччĕ», тенĕ чĕнÿре.

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин мĕнпур членĕсено тата Монголири пĕтĕм халăха çĕнĕ вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен ирсĕр планĕсене хирĕç, миршĕн, демократипе социализмшăн пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен хăватлă фронтĕнче, аслă Совет Союзĕ ертсе пыракан фронтра активлă кĕрешме, çав кĕрешĕве вăйлатса пыма чĕнет.

Монголи халăхĕпе аслă Совет Союзĕнчи халăхăн туслăхĕ, Сухэ-Баторпа Чойбалсан пуçарнипе пулса тăнă туслăх, пирĕн ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхăн хăватлă тĕрекĕ, хамăрăн тăван çĕршыва малалла аталантарса тата чечеклĕнтерсе пырас ĕçри мĕнпур чаплă çитĕнÿсен çăлкуçĕ, эпир социализм çулĕпе ăнăçлăн малалла кайса пымалли шанчăк пулса тăрать.

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин мĕнпур членĕсене тата Монголин пĕтĕм халăхне совет халăхĕпе килĕштерсе пурăнмалли аслă туслăха хытă сыхласа тăма, ăна тата ытларах тĕреклетме, хамăрăн аслă тата чи лайăх туса—Совет Союзне, Ленинпа Сталинăн паттăр партине, хамăрăн аслă туса, учителе, аттене—Сталин юлташа чунтан-чĕререн парăнса тăма чĕнет.

Францири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕнче

ПАРИЖ, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Францири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ. Юлашки ларура Огюст Лекер «Францири коммунистсен партийĕн организациллĕ ыйтăвĕсемпе ĕçĕсем» çинчен тунă доклад тăрăх пренисем пынă.

Ку ларура Францири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Жак Дюкло юлашки сăмах тухса каланă.

Пленум Франци халăхне чĕнсе калани йышăннă. Унта çĕршыври мĕнпур патриотсене пĕрлешсе кĕрешме чĕннĕ. Мĕнпур патриотсен миршĕн, Германие хĕçпăшаллантарнипе хирĕç, Франци çарĕн националлă сăн-сăпатне пĕтерсе хурассине хирĕç, Франципе Америка оккупациленине хирĕç, Индо-Китайри вăрçа чарса лартассишĕн, Франци колонизаторĕсем Тунис халăхне хĕсĕрленине хирĕç, атомлă хĕçпăшала чарса лартассишĕн, пур çĕршывсене те хĕçпăшалсăрлатассишĕн, пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тутарассишĕн, Франципе ытти мĕнпур çĕршывсем хушшинчи сутуилĕве вăйлатассишĕн, Францири ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешме пĕрлешмелле, тесе каланă.

Пленум çавăн пекех Францири коммунистла тата демократиллĕ хаçатсене пулăшма укça пухма пĕтĕм çĕршывĕпе кампани ирттересси çинчен резолюци йышăннă.

Юлашкинчен пленум Францири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ хăйĕн генеральнăй секретарĕ Морис Торез патне саламлă çыру яма йышăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пĕр уйăх хушши, январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 31-мĕшчен пынă çапăçусенче, Америкăпа Англин агрессиллĕ çарĕсемпе Ли Сын Ман çарĕн наступленине сирсе ярса, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтернĕ.

Тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 11.721 çынна вĕлернĕ, амантнă тата тыткăна илнĕ. Тĕрлĕ йышши винтовкăсем—530, автоматсем—351, çăмăл пулеметсем—74, йывăр пулеметсем—14, тĕрлĕ йышши тупăсем—32, огнеметсем—4, рацисем—33, телефон аппаратĕсем—15, патронсем—115.974, алăпа ывăтмалли гранатăсем—1 076, тĕрлĕ йышши минăсем 118 тытса илнĕ.

Тăшман техникине çакăн чухлĕ пĕтернĕ тата сиенленĕ: танксем—57, автомашинăсем—35, тĕрлĕ йышши тупăсем—12; тăшманăн 64 карапне шыва путарнă, йывăçран тунă 20 суднă тытса илнĕ; 2 карапа сиенленĕ. Тăшманăн 174 самолетне персе ÿкернĕ, 165 самолетне сиенленĕ.

Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ февралĕн 16-мĕшĕнче Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусен кун йĕркинчи 5-мĕш пункт тăрăх хăвăртрах калаçса татăлма май килтĕр тесе, Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕ паянхи ларура, икĕ делегаци те хăйсен пĕтĕм йышĕпе пухăнсан, çак пункт тăрăх панă сĕнÿсен çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă проектне тăратнă.

Çĕнĕрен пăхса тухса улăштарнă проектра çапла каланă: «Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелес тесе икĕ енĕн çар командованийĕсен представителĕсем икĕ енĕн интересленекен правительствисене перемири çинчен тумалли килĕшĕве алă пуснă тата вăй-вăйа кĕнĕ хыççăн виçĕ уйăх хушшинче политикăллă конференци пухма, ăна çулĕ пуçăмра ирттерме, унта пулма хăйсен тивĕçлĕ представителĕсене уйăрма, унта ют çĕршывсен мĕнпур çарĕсене Корейăран илсе тухасси, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелесси тата ытти ыйтусем çинчен сÿтсе явма, çав ыйтусене калаçса татăлса йĕркелеме сĕнеççĕ».

Кун йĕркинчи 3-мĕш пункта сÿтсе явакан штаб офицерĕсен ларăвĕнче нейтральнăй государствăсен сăнав комиссине тума Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен штаб офицерĕ хăйсем енчен Совет Союзне, Польшăна тата Чехословакие чĕнме сĕннĕ. Америка командованийĕн штаб офицерĕ хăйсем енчен Швейцарие, Швецие тата Норвегие чĕнме сĕннĕ.

Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен штаб офицерĕ çапла сĕнÿ панă: икĕ делегаци те пĕр-пĕрин кандидатурисемпе килĕшни çинчен пĕр вăхăтра пĕлтермелле, тенĕ. Анчах Америка командованийĕн штаб офицерĕ, нимĕнле сăлтав та кăларса тăратмасăрах, Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕн сĕнĕвĕпе килĕшмени. Совет Союзĕнчен нейтральнăй государствăсен комиссине хăйĕн представительне уйăрса яма ыйтнине хирĕç пулни çинчен пĕлтернĕ.

Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен штаб офицерĕ Америка делегацийĕн эпир сĕнчĕ нейтральнăй çĕршывсен никăш кандидатурине сирсе яма та сăлтав çуккине палăртнă, Америка делегацийĕнчен кун пирки тĕплĕ шухăшласа пăхма, кун хыççăн ответ пама ыйтнă.

Вăл Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕ кун йĕркинчи 3-мĕш пункта йĕркелеме пĕтĕмпех юрăхлă тата ăс-тăнлă сĕнÿсем тăратнине палăртнă. Апла пулсан, кун йĕркин 3-мĕш пункчĕ тăрăх хăвăртрах калаçса татăлса килĕшÿ тăвасси пĕтĕмпех Америка командованийĕн позицийĕнчен килет, тенĕ вăл.

Кун йĕркинчи 4-мĕш пункта сÿтсе явакан штаб офицерĕсен ларăвĕнче Америка делегацийĕн штаб офицерĕ пирĕн делегаци февралĕн 14-мĕшĕнче тăратнă сĕнÿсем пирки тĕлли-паллисĕр сăмахсем каланă, ку ыйту пирки ăс-тăнлă позици йышăнма килĕшмен. Вăл тыткăна лекнĕ çар çыннисене «хăйсен ирĕкĕпе каялла ямалли» принципа хÿтĕленĕ, çав принцип юрăхсăр пулнине уйччевех тĕплĕн кăтартса панă ĕнтĕ. Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен штаб офицерĕ тепĕр енĕн штаб офицерне вăл çавăн пек позици йышăнни нумайччен тавлашасси патне илсе пырассине, Америка делегацийĕ кун йĕркинчи 4-мĕш пунктри ыйтусене йĕркелеме тăрăшмасан, вĕсем пирки калаçса татăлма май килменнине палăртнă.

Бонри пресс-конференцире

БЕРЛИН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Бонн хулинчен çапла пĕлтернĕ: февралĕн 14-мĕшĕнче каçхине Бонра Демократиллĕ Германи Республикин правительстви февралĕн 13-мĕшĕнче Германие оккупацилесе тăракан тăватă державăна чĕнсе каланă пирки пресс-конференци пулнă.

Бонри влаçсен официальнăй представителĕ пресс-конференцире Демократиллĕ Германи Республикин правительстви чĕнсе каланă пирки заявлени тунă. Вăл тĕлли-паллисĕр, ăнланма йывăр тата нимĕне пĕлтермен пушă сăмахсем каланă.

Вăл каланă тăрăх çапла шухăшлама пулать,—тет корреспондент, — Бонри влаçсем Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Германие оккупацилесе тăракан тăватă держава правительствисене чĕнсе каланă пирки хăйсем мĕн шутлани çинчен калаcа парассинчен пăрăнасшăн, вĕсем куя пирки хĕвеланăçĕнчи союзниксем мĕн калассине кĕтсе тăма, çавăн хыççăн кăна хăйсен шухăшне пĕлтерме вăхăт тупасшăн. Пурте Демократиллĕ Германи Республики хăйĕн нотине вăхăтра, чи кирлĕ чухне, ярса панă, тесе шутлаççĕ. Кун çинчен пресс-конференцире Бонри правительствăн представителĕ те каланă. Корреспондент пресс-конференци пынă вăхăтра, вĕсне вăхăт хушшинче, калаçса илме ăлкĕрнĕ депутатсем пурте ăна Демократиллĕ Германи Республикин правительстви хăйĕн нотине питĕ кирлĕ вăхăтра ярса панă тесе шутлани çинчен пĕлтернĕ.

Бразили халăхĕ апат-çимĕçпе таварсем хакланнине хирĕç кĕрешет

МОНТЕВИДЕО, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Бразили халăхĕ çĕршывра апат-çимĕçпе таварсем хакланса пынине, ĕçсыннисен алăк те йывăр пурнăçĕ тата ытларах начарланса пынине хирĕç кĕрешет.

Юлашки эрне хушшинче Бразилири кулленех кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç хакĕсем, сăмахран, аш-какай хакĕ, темиçе хут ÿснĕ. Çавăн пирки пĕтĕм çĕршывĕпех халăх протестлесси, демонстрацисем ирттересси анлă сарăлнă. Бело-Оризонте хулинче (Минас Жерайс штачĕ) халăх уйрăмах хытă пăлханнă.

Бразилири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, демонстраци тума тухнă халăха çар чаçĕсемпе полици хытă хĕсĕрленĕ. Çапах та апат-çимĕçпе таварсем хакланнине хирĕç протестлемелли демонстрацисем тăватă кун хушши пулса пынă, демонстрацие 50 пин çын хутшăннă. «Коррейо да Манья» хаçат Бело-Оризонтра халăх уйрăмах вăйлă пăлханни, унта халăх аш-какай магазинĕсене аркатни, сутту-илÿ чарăнса ларни çинчен пĕлтерет. «Импренса популар» хаçатра çырнă тăрăх, Минас Жерайс штачĕн губернаторне халăха пĕр хĕртекенсĕр аркатма Варгас президент хăй тÿрремĕнех хушнă. Халăха хирĕç çапăçнă çĕрте газ тултарнă бомбăсемпе тата хĕçпăшалпа усă курнă. Çар чаçĕсемпе полици халăха хирĕç çапăçнă чухне чылай çынсен вилнĕ тата аманнă, уйрăмах кĕрарăмсемпе ачасем хушшинче вилнисемпе аманнисем ытларах пулнă. Пурнăç начарланнине хирĕç протестлеме хутшăннă чылай çынсене полици тытса хупнă.

Федеральнăй округран, Сан-Пауло, Рио-Гранде-до-Сул, Минас Жерайс тата Рио де Жанейро штачĕсенчен апат-çимĕçпе япаласем хакланнине хирĕç протестлемелли юхăм анлă сарăлни, халăх протестленине кура апат-çимĕç хакне ÿсетни çинчен пĕлтереççĕ. Массăсем протестленĕ пирки Рио де Жанейрăра аш-какай хакĕ 60 процент чухлĕ ÿйвелнĕ. «Импренса популар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Макао хулинче халăх шыв тата электричество енерлийĕ çитменнине хирĕç протестлесе демонстраци ирттернĕ. Халăх Макабури гидроэлектростанцин çуртне тапăннă, çуртăн малти пайне аркатнă. Протестлеме пухăннă халăха салатса яма Марешал Эрмес крепоçĕнчен салтаксем илсе пынă, салтаксем демонстрацие тухнă çынсене хирĕç çапăçма килĕшмен, вĕсемпе пĕрлешнĕ. Салтаксем чарнипе полици демонстрантсене арестлеймен. Рио де Жанейрăра халăх тинĕс транспорчĕнче билетсен хакне ÿстернине хирĕç протестленĕ, Кантарейра текен пристане аркатнă.

МАЛАЙЯ ХАЛĂХНЕ ХИРĔÇ ÇАПĂÇНА ÇĔРЕ АФРИКА ÇАРĔСЕНЕ ХУТШĂНТАРНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕСЕ ЛОНДОНРА МИТИНГ ИРТТЕРНĔ

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Лондонра пысăк митинг пулнă. Ăна «Африканецсене пĕрлештерсе тăракан организаци» пухнă. Митинга Африка çарĕсемпе Малайăри наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма пусарма усă курнине хирĕç протестлес шутпа ирттернĕ. Митинга пухăннисем «Англи империализмĕ тĕп пултăр!», «Пирĕн çамрăксене Малайăран каялла илсе килĕр!» тесе çырнă лозунгсем çĕклесе пынă.

Митингра Лондонра кашни уйăхра тухакан «Малайен Монитор» бюллетенĕн редакторĕ Лим, Великобританири коммунистсен партийĕн представителĕ Идрис Кокс, Африка студенчĕ Дж. Аппиа тата ыттисем те сăмах тухса каланă.

Австрири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн политбюровĕ пичетлесе кăларнă заявлени

ВЕНА, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Австрири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Австри ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Груберпа нумаййччен калаçнă хыççăн Америка корреспонденчĕ Маккормак «Нью-Йорк таймс» хаçатра хăйĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿрен Америка империализмĕн пысăк ĕçсем тăвакан çыннисем, Австри правительствинчи политикăллă деятельсемпе пĕрле ĕçлесе, Австрипе Атлантика блокĕнчи державăсен пĕр енлĕ килĕшĕвне тутарма, государство договорне çавăн пек килĕшÿпе улăштарма тăрăшни курăнать, çакă вара юлашкинчен пирĕн çĕршыв пайланасси патне илсе пырать. Америка корреспонденчĕ пĕлтернĕ хыççăн кун пирки нимĕн иккĕленмелли те юлмасть. Австри правительствин заявленийĕпе ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ юлашки хут калаçса панни çакна кăтартса параççĕ: Австри ыйтăвне Мускаври декларацие Потсдамри решенисем тăрăх аслă державăсем калаçса килĕшÿ тунипе йĕркелес ĕçе пăрахăçламалли план хатĕрленĕ, çав план тăрăх Австри ыйтăвне Пĕрлешнĕ нацисен организацине памалла, унта ăна Америка майлă тăракансен ытларахăшĕ сасăланипе татса памалла тума палăртнă».

«Австри пĕрлĕхне хытă тапăннă, ăна пĕтерсе лартас хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра,— тенĕ малалла заявленире, — коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ рабочи-коммунистсене, рабочи-социалистсене тата партире тăман рабочисене кăна мар, Австрири мĕнпур çынсене пĕрлешме, Америкăна пулăшакансен планĕсене хирĕç пĕрлешсе кĕрешме, çапла вĕсен планĕсене пурнăçлассине чăрмантарма чĕнет. Австрири демократиллĕ мĕнпур вăйсем, хăйсем нумай ыйтусем пирки тĕрлĕ шухăшланине пăхмасăр, пĕрлешсе кĕрешнипе кăна пĕтĕмĕшле тĕллеве пурнăçлама, Австрие пĕтмелли хăрушлăхран хăтарма май парать».

Заявленире Австрири коммунистсен партийĕн председателĕ, парламент депутачĕ Коплениг Австрири коммунистсен партийĕн XV-мĕш съездĕнче мĕн каланине аса илтернĕ. Унта Коплениг çапла каланă: «Халĕ, тару-тăру йывăрланса çитнĕ вăхăтра, пирĕн умра пирĕн тăван çĕршывăн кунçулĕ пирки шикленекен мĕнпур çынсене пирĕн халăхăн мире юрататакан тата демократиллĕ мĕнпур сийĕсене тата вăйĕсене Австри халăхĕн мирпе ирĕклĕхшĕн кĕрешмелли фронтне хутшăнтарас, вĕсене пĕрлештерес, массăсене Америкăн вăрçă хатĕрлемелли политикине хирĕç, наци сутмалли политикăна тата халăха эксплуатациленине хирĕç кĕрешме мобилизацилес, миршĕн, наци никама пăхăнманлăхĕшĕн тата социальнăй пурнăçа малалла аталантарса пырассишĕн кĕрешме мобилизацилес задача тăрать».

«Çавăн пек правительствăна, наци никама пăхăнманлăхне сыхласа усрассишĕн, миршĕн тата ĕç халăхĕн пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн тăрăшмалли политика тытса пыракан правительствăна эпир, коммунистсем, унта кĕрсен те е кĕмесен те, пулăшса тăрăпăр», тенĕ юлашкинчен заявленире.

Совет Союзĕнчи халăхсемпе мирлĕ тата туслă пурăнассишĕн

Америкăпа Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕн наци совечĕн конференцийĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 16-мĕшĕнче Нью-Йоркра Америкăпа Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕн наци совечĕн конференцийĕ пулнă.

Конференцие Америкăри прогрессивнăй деятель Алфеус Хантон доктор уçнă. Вăл çапла каланă: конференци тĕллевĕ тĕнчери çĕршывсем хушшинчи тĕп ыйтусем тăрăх Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ пĕр-пĕрне лайăхрах ăнланса илессине, Америка халăхĕ Совет халăхĕпе тата тĕнчери мĕнпур халăхсемпе мирлĕ тата туслă пурăнма тÿрĕ кăмăлпа тăрăшнине пурнăçламалли çул-йĕре палăртасси пулса тăрать, тенĕ.

Пирĕн çĕршывра «тимĕр чаршав» туса хунă, çав чаршавпа Америка халăхĕнчен Совет Союзĕнчи халăх демократи çĕршывĕсенчи тата мĕнпур çĕршывсенчи халăхсен чăн-чăн пурнăçĕ çинчен калакан хыпарсене пытарса тăма усă кураççĕ, пирĕн çав «тимĕр чаршава» аркатас пулать, тенĕ Хантон. Çакна пурнăçласси пирĕн мирлĕ пурнăç тумалли çул çинче тăракан пĕрремĕш задача пулса тăрать, тенĕ вăл.

«Атом энергине контроллесе тăрасси çинчен» Америкăпа Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕн наци совечĕн членĕ Гарри Грундфест доктор доклад тунă. Вăл атом энергине контроллесе тăрас пирки Совет Союзĕ панă сĕнÿсем çинчен тĕплĕ калаcа панă. Атом энергине контроллесе тăрас ыйтура Америка правительствин позицийĕ нимĕн те улшăнман вăхăтрах, тенĕ докладчик. Совет правительстви ку ыйтăк ыйтупа темиçе хутчен те сĕнÿсем панă. Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствипе калаçса татăлма тăрăшнă. Анчах США правительстви, хăйĕн атомлă дипломати теменсĕрне, путланса ларнă дипломатие, хирĕçÿсене каларса татăлса килĕшÿ тунипе мар, вăйпа усă курнипе татса памалли дипломатие пурнăçлама тăрăшса, Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене йышăнма килĕшмерĕ.

Америкăн тулашри политики ăнса пымасть, пĕр ăнăçсăрлăх хыççăн тепĕр ăнăçсăрлăх тÿсет, тенĕ Грундфест. США-н агрессиллĕ политикине Европăри çĕршывсем ырламаççĕ. Вĕсем Америкăн Корейăри агрессийĕ мĕн патне илсе пынине курса, кун пирки ытларах та ытларах шикленеççĕ. Атом энергине тĕрĕслесе тăма тĕнчери тĕрĕс контроле тăвас тĕлĕшпе юлашки сăмаха Америка халăхĕн каламалла, Совет Союзĕпе тата ытти çĕршывсенчи халăхсемпе мирлĕ тата туслă пурăнассишĕн тăракан халăхăн хăйĕн юлашки сăмахне каламалла, тенĕ Грундфест.

«Европăра йывăр лару-тăру пулса тăнин сăлтавĕ—Германи» темăпа Америкăри паллă экономист В. Перло доклад тунă.

Европăра лару-тăру йывăрланнин сăлтавĕ Америка Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклентермелли политика тытса пыни пулать, тенĕ вăл. Америкăри влаçра тăракан ушкăнсем пирĕн куç умĕнчех Гитлерăн путланса ларнă планне—«Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене тапăнмалли» плана çĕнĕрен пурнăçлама хатĕрленеççĕ, эпир çакна пурте курса тăратпăр. Пирĕн куç умĕнчех Хĕвеланăç Германие Америка монополийĕсем пуç пулса тăракан çĕршыв тăваççĕ. Халĕ Америка Германире хывнă капитал хисепĕ вăрçăчченхи хисепрен пысăкрах. США-н çавăн пек политики Германи тепĕр хут агрессиллĕ ĕçсем тăвасси патне, Германишĕн Корея шăпи тухса тăрасси патне илсе пырать.

Германи тĕлĕшпе Совет Союзĕ пачах та урăхла политика тытса пырать, ССР Союзĕ политикин тĕллевĕ пĕрлĕхлĕ, мире юрататакан, демократиллĕ Германи туса хурасси пулать, тенĕ Перло.

Совет Союзĕ тÿрĕ кăмăлпа миршĕн тăрать. Унăн мирлĕ политики Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлесе пурăнакан Хĕвелтухăç Германи чечекленсе ÿссе пынинчен лайăх курăнать. Нимĕç халăхĕ хăйĕн пĕрлĕхлĕ çĕршывне туса хума тăрăшнине Америка халăхĕ, совет халăхĕ пекех, ырлать. Историре пулса пыракан ĕçсем Америка правительствине Германие мирлĕ пĕрлештерес çул çине тăма, Совет правительстви сĕнекен çул çине тăма хистессине Америка халăхĕ шанса тăрать.

«Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи лару-тăру» çинчен «Дейли компас» хаçат сотрудникĕ Хью Дин журналист доклад тунă. Вăл Америкăра влаçра тăракан ушкăнсем Азири çĕршывсене Америка империализмĕн колонийĕсем туса хума тăрăшнине, агрессиллĕ политика тытса пынине, ку вăл Корейăра юнлă вăрçă вăрçнинче палăрнине кăтартса панă, çав политика путланса лармаллине палăртнă. Кун пек политикăна США-н чи çывăх союзникĕсем те ырламаççĕ. Пирĕн, американецсен, хамăр сăмаха, хамăр миршĕн тăни çинчен калас пулать, тенĕ Дин.

Юлашкинчен конференцире «Пилĕк аслă держава мире сыхламалли килĕшÿ тунин пĕлтерĕшĕ» çинчен «Нью уорлд ревью» журнал редакторĕ Джессика Смит доклад тунă.

Пирĕн пилĕк аслă державăна пĕр-пĕринпе мире сыхламалли килĕшÿ тутарассишĕн тăрăшас пулать. Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи халăхăн ытларахăшĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тума ыйтнине, çав килĕшÿ пур ыйтусене те мирлĕ майпа татса парасси патне илсе пырассине эпир пĕлетпĕр, тенĕ Смит.

Америка халăхĕ, пĕтĕм тĕнчери ытти халăхсем пекех, мĕнпур халăхсемпе, пуринчен малтан совет халăхĕпе, туслă пурăнма тăрăшать. Пирĕн çĕршывра миршĕн тăракансен йышĕ кунтан-кун ÿссе пырать. Америка халăхĕ ытти халăхсемпе пĕр шухăшлă пулса тăрăшнипе мире сыхласа хăварассишĕн пыракан аслă çапăçура çĕнтерме пултарĕ. Кĕрешÿре çĕнтернипе эпир мирлĕ пурнăç тума пултарăпăр.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕН МАНЕВРĔСЕМ АВСТРИ ХАЛĂХНЕ ПЫСĂК СИЕН КÿНĔ

ВЕНА. (ТАСС). Зальцбург тата Тури Австри территорийĕнче Америка оккупаци çарĕсен хĕллехи маневрĕсене ирттернĕ. Çав вăхăтра оккупаци çарĕсем Австри халăх хуçалăхне пысăк сиен кÿнĕ. «Нейе цейт» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тури Австрири танксем çÿренĕ çулсем юрăхсăра тухнă. Танксем çул çинчи паллăсене тата телеграф юписене пĕтĕмпе пекех пĕтерсе тăкнă.

Америка çарĕсен маневрĕсем Зальцбургри тата Тури Австрири халăха хытă тарăхтарнă. Нумай çуртсем çинче «Американецсем, киле тухса кайăр!» тесе çĕнĕрен çырнисем пур.

Спорт хыпарĕсем

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче

Февралĕн 17-мĕшĕ. Атăл леш енче, учительсен канмалли çурчĕ патĕнче, вăл кун уяв пекех пулчĕ. Унта та кунта спорт ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ. Радио тăрăх физкультурниксен юррисене шăрантараççĕ. Хĕрлĕ питлĕ физкультурниксем çине пăхсан чун савăнать. Кун пек сывă та тĕреклĕ çамрăксем пирĕн çĕршывра, ырлăхпа телей çĕршывĕнче çеç пулма пултараççĕ.

Шкулсемпе предприятисенче, учрежденисенче ирттернĕ йĕлтĕрçĕсен массăллă кросĕнче мала тухнă физкультурниксем хулара мала тухассишĕн пулакан ăмăртăва килнĕ.

Судья ăмăрту пуçланни çинчен пĕлтерет. Йĕлтĕрçĕсем йĕркипе тăрса тухаççĕ. Судья аллине сулсан, физкультурниксем пĕрин хыççăн тепри çăмăллăн малалла чупаççĕ. Хĕрарăмсем 5 километр, арçынсем 10 километр ăмăртса чупаççĕ. Ăмăртакансен çулĕ çăмăл мар: йĕлтĕр йĕрĕ ĕмĕрхи хырсемпе чăрăшсем хушшипе пĕрре тÿрĕ вырăнпа пырать, тепре—айлăмалла анса каять. Унтан физкультурниксен çулĕ сăрт çине хăпарма тивет. Йĕлтĕрçĕсем пур йывăрлăхсене те çĕнтерсе малтан мала ыткăнаççĕ.

...Финиш патĕнче халăх нумай пухăннă. Пурте хыр вăрманĕ енне тинкереççĕ, йĕлтĕрçĕсем килессине кĕтеççĕ.

— Пĕри курăнчĕ!—кăшкăрса ярать пĕр çамрăк,—çул парăр!

— 722-мĕш номер!—кăшкăрать тепри.—Александр Швабауер вăл—Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи стахановец.

Йĕлтĕрçĕсем финиш умĕпе ярăнса иртеççĕ.

— Юрий Семенов килет!—пĕлтерет пĕр физкультурник.

Чăн та, темиçе секундран финиш патне тĕреклĕ, çăмăл шăмшаклă çамрăк çитрĕ. Семенов—педагогика институтĕнчи студент. Вăл Пĕтĕм Союзри спорт классификацийĕн иккĕмĕш разрядри нормине тултарчĕ.

Хуларан физкультурниксем вĕçĕмсĕр килсе тăраççĕ. Пĕрисем старта тухаççĕ, теприсем—финиша çитеççĕ.

Хулара йĕлтĕрпе мала тухассишĕн пыракан ăмăртăва темиçе çĕр çын хутшăнчĕ. Нумайăшĕ разрядри нормăсене тултарчĕç, ыттисем ГТО значокĕн нормисене пачĕç.

Хоккей

„Молния“ команди çĕнтернĕ

Февралĕн 17-мĕшĕнче хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн Шупашкарти «Спартак» тата «Молния» спорт обществисен командисем тĕл пулса вылярĕç.

Çак вăйăччен «Молния» спорт обществи команди, 4 хут выляса, 12 очко, «Спартак» спорт команди, 3 хут выляса, 9 очко пухнă. Икĕ команди те пĕре те выляса яман пулнă. Çавăнпа ку командăсен вăййипе интересленекенсем нумай пулчĕç.

Вăйă пуçлансан часах стадион хуçисем «Спартак» команди алăкне пĕр мечка çапса кĕртеççĕ. Спартаковецсем куншăн ÿкĕнмеççĕ. Вĕсем пĕрмаях тапăнса выляса, вăйă шутне танлаштараççĕ, унтан—иккĕмĕш мечка çапса кĕртеççĕ. «Молния» спорт обществи хоккеисчĕсене пĕрремĕш тайм пĕтес умĕн çеç вăйă шутне танлаштарма май килчĕ.

Иккĕмĕш тайм пуçлансан «Молния» спорт обществи хоккеисчĕсем виççĕмĕш мечка çапса кĕртеççĕ. Çакăн хыççăн спартаковецсем пурте тенĕ пек тапăнса вылять тытăнчĕç. Анчах вĕсене урăх пĕр мечка та тапса кĕртме май килмерĕ. Стадион хуçисем тепĕр мечка çапса кĕртрĕç.

Вăйă 4:2 шутпа «Молния» команди çĕнтернипе вĕçленчĕ.

* * *

Хоккей вăййипе Шупашкар хулинче мала тухассишĕн ирттерекен ăмăртура «Пищевик» спорт обществи командипе Чапаевски поселокри хоккеистсем тĕл пулса выляреç. «Пищевик» спорт обществи команди 3:6 шутпа выляса ячĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, февралĕн 19-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
„Ревизор“
Ыран, февралĕн 20-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
„Я л т а“
Спектакльсем каçхине 20 сехетре пуçланаççĕ.

„Родина“ кинотеатрта
Паян, февралĕн 19-мĕшĕнче,
„На берегах Верхней Волги“
тата
„Театр зверей“
ятлă научно-популярнăй фильмсем.
Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00626 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.